3961

А. С. ОТАЧКИН

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

ПУҪЛАМӖШ ШКУЛӐН
ВИҪҪӖМӖШ КЛАСӖНЧЕ
ВӖРЕНМЕЛЛИ УЧЕБНИК

ЧӐВАШГОСИЗДАТ
1947

А. С. ОТАЧКИН

29 сентября 47
№ 75

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

ПУҪЛАМӖШ ШКУЛӐН
ВИҪҪӖМӖШ КЛАСӖНЧЕ
ВӖРЕНМЕЛЛИ УЧЕБНИК

*Чӑваш АССР Ҫутӗҫ министерстви ҫирӗплетнӗ*

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1947

# 1 §. Ансăр предложенипе анлă предложени.

*1-мĕш хăнăхтару.* Статьяна вуласа тухăр. Унта ансăр предложени миçе? Анлă предложени миçе?



## Панулми татса пуçтарни.

Кĕр çитрĕ. Хирте ĕçсем пĕтрĕç. Пахчара çимĕçсем пулса çитрĕç. Панулми пиçрĕ. Панулми татса пуçтарма вăхăт ĕнтĕ. Ăнса пулнă панулмие пахчаçăсем татса пуçтараççĕ. Хĕлле çимелли панулмисене вĕсем ещĕксем çине тултарса хураççĕ, çемçелнисене кĕркунне çиме уйрăм хураççĕ.

*2-мĕш хăнăхтару.* Çак картинăна тĕплĕн сăнаса пăхса тухăр.



Каласа парăр: Картина çинче çулталăк хушшин хăш вăхăтне ӳкерсе кăтартнă?

Картина çинче мĕнле-мĕнле япаласене ӳкерсе кăтартнă?
Мĕншĕн йывăççен çулçисем çукпа пĕрех?
Çилос башнисем пушă-ши, тулли-ши?
Хур кайăксем ăçталла вĕçсе каяççĕ?
Çулталăк хушшин мĕнле вăхăчĕ çывăхарса килет?
Çак картина тăрăх хăвăр калав тăвăр. Калав ятне „Хура кĕркунне" тесе хурăр.

*3-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Сăввăн кашни предложенийĕнче подлежащие тата сказуемăя кăтартăр.

* * *

Шăрăх çăвăн сар хĕвелĕ
тек хавассăн çутатмасть.
Кĕрхи çумăр—тĕтре витĕр
тăрă пĕлĕт курăнмасть.

Кайăксен сасси лăпланчĕ.
Тек кĕтӳ тухмасть хире.
Сĕм вăрман йăлтах çаралчĕ.
Вăл пуçне таять хĕле.

*4-мӗш хӑнӑхтару.* Аялта кӑтартнӑ сӑмахсенчен предложенисем тӑвӑр. Сӑмах вӗҫӗсене предложенире кирлӗ пек улӑштарӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсене ан улӑштарӑр.

1. **Ҫанталӑк**, ӑшӑ, тӑр.
2. Хир, **тырӑсене**, пуҫтар, **кӗнӗ.**
3. **Колхозниксем**, машина, авӑн ҫап.
4. **Ачасем**, шкул, ҫӳре.

*5-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак картинӑсем тӑрӑх „Ҫумӑр айне пулни" ятлӑ пӗчӗк калав ҫырӑр. Калавра миҫе предложени пулчӗ? Кашни предложенире мӗн ҫинчен каланӑ?



*6-мӗш хӑнӑхтару.* Аялта кӑтартнӑ темӑсенчен пӗрне суйласа илӗр те ун тӑрӑх пӗчӗк калав ҫырса парӑр.

1. Эпӗ вӑрмана кайни.
2. Эпӗ хула курни.
3. Эпӗ поезд курни.
4. Эпӗ пароход курни.
5. Эпӗ пуҫласа кино курни.
6. Эпӗ комбайн курни.

*7-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене вуласа тухӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсем мӗне пӗлтереҫҫӗ, мӗнле ыйтупа ыйтӑнаҫҫӗ?

1. Анлӑ **Атӑл** лӑпкӑн **юхать.**
2. Кӑтра **вӑрман** кашласа **ларать.**
3. Шурӑ **пароход** васкаса **иртет.**
4. **Пулӑҫӑ** вӑлтапа **ларать.**

*8-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑвӑран, япалана пӗлтерекен паллӑ тунӑ самахсене тата вӗсемпе ҫыхӑнса тӑракан япала мӗн

тунине пĕлтерекен сăмахсене çырса илсе, ансăр предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх: *Хĕвел йăлтăртатать.*

Сар хĕвел йăлтăртатать.
Пĕтĕм тĕнче савăнать.
Эпир хире тухатпăр.
Эпир юрă юрлатпăр.

Вăрман кашласа ларать.
Чăпар куккук авăтать.
Шывра хурсем ишеççĕ.
Хирте сынсем ĕçлеççĕ.

Ут çулаççĕ сар хĕрсем.
Ут çулаççĕ каччăсем.
Хавас юрă янăрать.
Ĕçри халăх савăнать.

Предложенире **кам е мĕн** çинчен каланине пĕлтерекен сăмаха **подлежащи** теççĕ. Предложенире подлежащи **мĕн тунине е унпа мĕн пулнине** пĕлтерекен сăмаха **сказуемăй** теççĕ.

Подлежащие **кам? е мĕн?** ыйтусем тăрăх пĕлеççĕ.

Сказуемăя **мĕн тăвать? мĕн тунă? мĕн тăвĕ?** ыйтусем тăрăх пĕлеççĕ.

Подлежащипе сказуемăй—предложенин аслă членĕсем.

***9-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта кăтартса панă кашни япала **мĕн туни** çинчен е **унпа мĕн пулни** çинчен каласа парăр. Кирлĕ сказуемăйне аялта çырнă сăмахсенчен суйласа илĕр.

*Тимĕрçĕ шаккать.* Çĕвĕçĕ . . . Писатель . . .
*Хĕвел пăхать.* Çил . . . Пĕлĕт . . . Шыв . . .
*Пăчăкă тататъ.* Сава . . . Мăлатук . . . Çĕçĕ . . .
*Куккук авăтать.* Хур . . . Шăпчăк . . . Кăвакал . . .

Кирлĕ сăмахсем: *какалать, çырать, çĕлет, вĕрентет, касать, шаккать, савалать, юрлать, нартлатать, юхать, вĕрет, шăвать.*

***10-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта панă кашни сказуемăй çумне подлежащи тупăр. Подлежащипе сказуемăйне çырса хурăр.

*Лаша кĕçенет.*
. . . юрлать.
. . . кăтиклет.
. . . мĕкĕрет.
. . . авăтать.
. . . вылять.

*Çерçи чĕвĕлтетет.*
. . . кранклатать.
. . . нăйлатать.
. . . сĕрлет.
. . . кваклатать.
. . . макăрать.

Кирлĕ сăмахсем: *хурт, автан, чăхă, тăри, ĕне, шапа, сурăх, вăрăмтуна, çăхан, путек.*

*11-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта панă кашни подлежащи çумне сказуемăй тупăр та пулнă предложение сăмахпа каласа парăр.

Шăнкăрч... Хĕвел... Çумăр... Аслати... Çиçĕм... Тăри... Пулă... Кĕтӳ... Çырма... Панулми... Çерçи... Пулемёт... Тупă... Самолёт...

**Ансăр предложенисем подлежащипе сказуемăйран пулаççĕ.**

Тĕслĕхсем: *Кун кĕскелчĕ. Çĕр вăрăмланчĕ.*

*12-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Подлежащине пĕр йĕрпе, сказуемăйне икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

## Кĕркунне.

Çу иртрĕ. Кĕр çитрĕ. Кун кĕскелчĕ. Çĕр вăрăмланчĕ. Хирсем çаралчĕç. Авăн пĕтнĕ. Çумăр çăвать. Вăрман саралчĕ. Çулçăсем тăкăнаççĕ. Тăм ӳккелет. Ачасем вĕренеççĕ.

*13-мĕш хăнăхтару.* Кашни картинка çинчен пĕрер предложени туса çырăр. Подлежащисене пĕр йĕрпе, сказуемăйсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.









*14-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Сăввăн кашни пайĕнче миçе предложени? Кашни пайне уйрăм ят парăр.

### Çулталăк вăхăчěсем.

1. Юр ирěлет.
   Çěр кěскелет.
   Шăнкăрч юрлать.
   Курăк шăтать.
2. Хěвел пěçертет.
   Çěр çырли пиçет.
   Çăка çурăлать.
   Тулă пулать.
3. Кун кěскелет.
   Çěр нӳрленет.
   Шăнкăрчсем кайнă.
   Хирсем çаралнă.
4. Хěвел ăшăтмасть.
   Курăк курăнмасть.
   Хир шап-шурах.
   Тăман ахăрать.

***15-мěш хăнăхтару.*** Сулахай енчи предложенисене сылтăм енчисемпе танлаштарса пăхăр. Хăш енче анлă предложенисем? Хăш енче ансăр предложенисем? Сылтăм енчи предложенисене çырса илěр. Подлежащисене пěр йěрпе, сказуемăйсене икě йěрпе аялтан туртăр.

| | |
|---|---|
| Иван вулать. | Иван кěнеке вулать. |
| Анна çырать. | Анна çыру çырать. |
| Ачасем вулаççě. | Ачасем лайăх вулаççě. |
| Ачасем çыраççě. | Ачасем хитре çыраççě. |
| Трактор кěрлет. | Хурçă трактор хирте кěрлет. |
| Калча ӳсет. | Симěс калча хăвăрт ӳсет. |
| Хур ишет. | Шурă хур шывра ишет. |
| Кěтӳ çӳрет. | Ешěл улăхра кěтӳ çӳрет. |

## 2 §. Сăмах составě.

***16-мěш хăнăхтару.*** Статьяна вуласа тухăр. Вăрман сăмах кашни предложенире мěнле улшăннине асăрхăр.

### Вăрман.

Пирěн ял çумěнчех вăрман пур. Вăрманпа юнашар шыв юхса выртать. Вăрманăн лаптăкě чылай пысăк. Çуллахи кунсенче эпир час-часах вăрмана çӳретпěр. Вăрманăн илемěпе савăнатпăр. Çырла вăхăтěнче вăрмана çырла татма çӳретпěр. Вăрманта кайăксем юрлаççě. Çулла вăрмантан тухас та килмест.

***17-мěш хăнăхтару.*** „Вăрман" ятлă статьяран вăрман сăмаха пур предложенисенчен те çырса илěр, сăмахěсене пěрпěрин айне туса çырăр. Сăмах вěçне дефиспа уйăрса çырăр.

Тěслěх: *Вăрман.*
*Вăрман-па.*

*18-мĕш хăнăхтару.* а) „Кăмпа“ ятлă статьяна çырса илĕр. Паллă тунă кăмпа сăмахăн кашни форми хыççăн скобкăра унăн ыйтăвне лартăр: ***мĕн?*** е ***мĕнĕн?*** е ***мĕнре?*** е ***мĕнпе?*** т. ыт. те. б) Кăмпа сăмахăн кашни формине пĕр-пĕрин айне туса çырса илĕр. Сăмах вĕçне кĕске йĕрпе—дефиспа уйăрса çырăр.

## Кăмпа.

Пирĕн ял çумĕнчи вăрманта **кăмпа** нумай пулать. Çуртырри вырса пĕтерсен, эпир **кăмпана** çÿретпĕр. Пирĕн анне **кăмпаран** тĕрлĕ апат хатĕрлет.

*19-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă сăмах кашни предложенире мĕнле улшăннине асăрхăр.

## Тимĕрçĕ.



Хĕвел пăхать тÿпере.
**Тимĕрçĕ** шаккать **тимĕре.**
Хĕртнĕ **тимĕр** лапчăнать,
чăнкки-чанкки янăрать.

**Тимĕрçĕ** алли пит ăста,
**тем** те тăвать **тимĕртен.**
**Тимĕрçĕсем** колхозра
питĕ кирлĕ ăстасем.

**Тимĕр, тимĕр-çĕ, тимĕр-тен, тимĕр-çĕ-сем** сăмахсене танлаштарса пăхăр. Тимĕр—сăмах тĕпĕ. **Тимĕр-çĕ, тимĕр-тен, тимĕр-çĕ-сем** сăмахсенче виççĕшĕнче те тĕпĕ тимĕр, анчах, тĕпĕсĕр пуçне сăмахсен вĕçĕнче **çĕ, тен, çĕсем** аффикссем пур.

> Аффикс хушăнса пулнă сăмаха **аффикслă сăмах** теççĕ. Аффикс хушăнман сăмаха **аффикссăр сăмах** теççĕ. Аффикссăр сăмах пĕтĕмĕшпех **сăмах тĕпĕ** пулса тăрать. Ун çумне **аффикссем** хушса урăх сăмахсем тума пулать.

*20-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта панă сăмахсене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх: *Пирĕн колхозăн лашисем лайăх.*

| | |
|---|---|
| колхоз-ăн | вăрман-лă |
| колхоз-а | вăрман-лăх |
| колхоз-па | вăрман-ти |
| колхоз-ра | вăрман-ĕ |
| колхоз-ран | вăрман-шăн |

Сӑмаха улӑштарма е пӗр сӑмахран тепӗр сӑмах тума сӑмах тӗпӗ ҫумне аффикс хушмалла. Аффикссем—сӑмахӑн улшӑнакан пайӗ. Сӑмах тӗпӗ—сӑмахӑн улшӑнман пайӗ.

***21-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑмахсене ҫырса илӗр. Сӑмахӑн тӗпне аффиксран уйӑрса ҫырӑр.

Тӗслӗх: *Пахча-сем.*

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| пахчасем | шывлӑ | чӑрӑшлӑ | совхоз | паянхи |
| пахчаҫӑ | шывсӑр | чӑрӑшӑн | совхозӑн | ӗнерхи |
| пахчалӑх | шывсем | чӑрӑшлӑх | совхозра | каҫхи |
| пахчам | шывӑм | чӑрӑшсӑр | совхоза | кӗрхи |

***22-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫакӑнта ҫырнӑ сӑмахсене вуласа тухӑр, унтан ҫырса илӗр. Сӑмах аффиксне сӑмах тӗпӗнчен уйӑрса ҫырӑр.

1. Пӳрт, пӳрте, пӳртпе, пӳртре, пӳртрен.
2. Пӳртлӗх. Пӳртри. Пӳртлӗ.
3. Пуҫлӑх. Пуҫла. Пуҫӑм. Пуҫри. Пуҫламӗш.
4. Ларчӑк. Хырчӑк. Шанчӑк.
5. Ӗҫле. Ӗҫлӗ. Ӗҫри. Ӗҫчен.

***23-мӗш хӑнӑхтару.*** Тӗп сӑмахсенчен урӑх сӑмахсем тунӑ чухне час-часах ҫак аффикссемпе усӑ кураҫҫӗ:

1. ***ҫӑ***, ***ҫӗ*** (пулӑҫӑ, кӗтӳҫӗ, пахчаҫӑ, тимӗрҫӗ, вӗҫевҫӗ).
2. ***лӑх***, ***лӗх*** (хуҫалӑх, хурӑнлӑх, вӗтлӗх, шӗшкӗлӗх, шурлӑх, арпалӑх, кӗпелӗх).
3. ***у***, ***ӳ*** (ҫыру, лару, суту, ӑмӑрту, вӗренӳ, ҫӗкленӳ).
4. ***лӑ***, ***лӗ***, ***ллӑ***, ***ллӗ*** (ӑслӑ, вӑйлӑ, кӗрнеклӗ, тӗреклӗ, пахчаллӑ, йӗркеллӗ).
5. ***сӑр***, ***сӗр*** (вӑрмансӑр, ҫилсӗр).
6. ***ла***, ***ле***, ***лла***, ***лле*** (кайӑкла, чӗкеҫле, лапталла, чушкӑлла, пуканелле).
7. ***ри***, ***ти***, ***чи*** (ялти, хулари, варринчи).
8. ***хи*** (ҫурхи, кӗрхи, хальхи, пӗлтӗрхи, ӗлӗкхи).
9. ***тар***, ***тер***, ***ттар***, ***ттер*** (ҫыртар, вӗртер, вулаттар, ӗҫлеттер).

***24-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Сӑмахӑн тӗпне аффиксран уйӑрса ҫырӑр.

## Кӗтӳ.

Хӗвел ҫӳле улӑхнӑ. Кӗтӳ тапӑрта выртать. Выльӑхсем хӑшӗ выртаҫҫӗ, хӑшӗ шыв ӗҫеҫҫӗ. Качакасем ҫӳллӗ

çыран çине улăхаççĕ. Пĕр-пĕрне майракисемпе шăк-шак! тĕксе илеççĕ. Кĕтӳçĕ апат çиет. Кăнтăр иртрĕ. Выльăхсем канчĕç. Кĕтӳçĕ выльăхсене курăк çитерме хирелле хăваласа кайрĕ.

*25-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене вуласа тухăр. Хытă сăмахăн аффиксĕ мĕнле пулать? Çемçе сăмахăн аффиксĕ мĕнле пулать?

| | | | |
|---|---|---|---|
| пулă-çă | хăват-лă | телей-лĕ | тимĕр-çĕ |
| пахча-çă | хавас-лă | кĕрнек-лĕ | çĕвĕ-çĕ |
| çыру-çă | хастар-лă | тирпей-лĕ | шерепе-ллĕ |
| сăвă-çă | паттăр-лă | йĕрке-ллĕ | шерепе-сĕр |

Хытă сăмахăн аффиксĕ те хытă пулать, çемçе сăмахăн аффиксĕ те çемçе пулать.

*26-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене, çумне ***лă*** е ***лĕ*** аффикс хушса, çырса илĕр. Хытă сăмах çумне ***лă*** аффикс хушăнать, çемçе сăмах çумне ***лĕ*** аффикс хушăнать.

| | | |
|---|---|---|
| вăй-*лă* | сĕт... | турат... |
| тĕп... | нӳр... | хăват... |
| хут... | сорт... | çунат... |
| шут... | чул... | кăвар... |

*27-мĕш хăнăхтару.* Çак аффикссăр сăмахсенчен, май килекен аффикссем хушса, аффикслă сăмахсем тăвăр.

| | | |
|---|---|---|
| ăрат | хыр | кĕпе |
| çурт | хурăн | арпа |
| пӳрт | вăрман | кĕрĕк |
| сăрт | çăка | сăхман |

*28-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсен тĕпĕсене тата аффиксĕсене асăрхăр. Хытă сăмахсем çумне мĕнле аффикссем хушăнаççĕ?

| | | | |
|---|---|---|---|
| ача-сем | картус-ĕ | тăватта-мĕш | çирĕп-скер |
| çын-сем | çăлкуç-ĕ | вунна-мĕш | лайăх-скер |
| паттăр-сем | саппун-ĕ | кайнă-ччĕ | паттăр-скер |
| маттур-сем | ур-и | çитнĕ-ччĕ | маттур-скер |

***Сем, ĕ, и, мĕш, ри, хи*** аффикссем—**мăшăрсăр** аффикссем. Вĕсен хытă мăшăрĕ çук, çавăнпа вĕсем хытă сăмахсем çумне те çемçе формăпах хушăнаççĕ.

*29-мĕш хăнăхтару.* Çакăнти пĕлтерĕшĕ енчен пĕр пекрех предложенисен уйрăмлăхне кăтартса парăр.

| Пĕрреллĕ хисеп. | Нумайлă хисеп. |
|---|---|
| Арман авăр-ать. | Арман-сем авăр-аççĕ. |
| Аэроплан вĕç-ет. | Аэроплан-сем вĕç-еççĕ. |
| Автомобиль чуп-ать. | Автомобиль-сем чуп-аççĕ. |
| Трактор кĕрл-ет. | Трактор-сем кĕрл-еççĕ. |

*сем* аффикс япала нумайăшне пĕлтерет.

*аççĕ, еççĕ* аффикссем ĕçе нумайăн тунине пĕлтереççĕ. (*Армансем авăраççĕ. Тракторсем кĕрлеççĕ*).

*ать, ет* аффикссем ĕçе пĕччен тунине пĕлтереççĕ.

(*Арман авăрать. Трактор кĕрлет*).

## 3 §. Хутлă сăмахсемпе мăшăр сăмахсем.

*30-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсем мĕнле пулнине асăрхăр.

### Пирĕн йывăç пахчи.

Пирĕн пĕчĕк йывăç пахчи пур. Ăна **асаттепе асанне** хăйсем çамрăк чухнех лартнă. Пахчара **улмуççисем** тата хурлăхан йывăççисем пур.

Пирĕн пахчара **панулми** ăнса пулать. Хăш туратсем хăйсен улмисене аран çĕклесе лараççĕ. Асаттепе атте ытла усăнса анакан туратсене йÿплĕ тĕкĕсемпе тĕкĕлесе хураççĕ. Кашни **кĕркуннех** эпир пахчаран **панулми** татса кĕретпĕр.

Пирĕн **панулми çулталăкĕпех** çиме çитет. Анне хĕлле те кашни апатрах пире **тĕпсакайĕнчен** илемлĕ **панулмисем** илсе тухса парать.

Çакăнта паллă тунă сăмахсем кашниех икĕ е виçĕ тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмах пĕрлешнипе пулнă: асатте—аслă атте, асанне—аслă анне, улмуççи—улма йывăççи, тĕпсакай—тĕп сак айĕ.

Тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ икĕ е виçĕ сăмах пĕрлешнипе пулнă сăмахсене **хутлă сăмахсем** теççĕ.

Хутлă сăмахсене пĕрле çыраççĕ.

*31-мĕш хăнăхтару.* Çак хутсăр сăмахсене пĕрлештерсе, хутлă сăмахсем тăвăр.

Тĕслĕх: *Ура айĕ—урай.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ура айĕ | кĕр кунĕ | çул пуçĕ | хура тулă |
| тĕшĕ тырă | çăл куçĕ | шыв сикки | çăра уççи |
| çĕр улми | çĕр кăмрăкĕ | тунти кун | çур тырри |
| çур кунĕ | авăн карти | çăм ată | ĕç халăхĕ |

*32-мĕш хăнăхтару.* Кĕркунне, çуркунне, çурçĕр, кăçал, тырпул, анкарти хутлă сăмахсене кĕртсе предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх: *Папанинпа унăн юлташĕсем Çурçĕр полюсĕ патĕнче хĕл каçнă.*

Калаçнă чухне час-часах, пĕр еверлĕ япаласене пĕрлештерсе, икĕ пĕр йышши сăмаха мăшăрлатса калаççĕ: *çăкăр-тăвар*, *ată-пушмак.* Кун йышши сăмахсен пĕлтерĕшĕ уйрăм сăмах пĕлтерĕшĕнчен анлăрах пулать. Çакăн пек пĕлтерĕше анлăлатса, пĕр еверлĕ япаласене пĕрлештерсе, мăшăрлатса калакан сăмахсене **мăшăр сăмахсем** теççĕ.

*33-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Хутлă сăмахсене пĕр йĕрпе, мăшăр сăмахсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

1. Шыв-шур типичченех çураки пуçланать. 2. Лайăх ĕçлекен колхозсем çуракине пилĕк-ултă кунтах пĕтереççĕ. 3. Колхоз уй-хирĕсенче халь тракторсем, комбайнсем ĕçлеççĕ. 4. Ĕлĕкхи хăрăк-харăк сухапуçĕ вырăнне халĕ пысăк машинăсемпе ĕçлеççĕ.

Астăвăр: Мăшăр сăмахсене дефиспа çыхăнтарса çыраççĕ

*34-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва çырса илĕр. Хутлă сăмахсене пĕр йĕрпе, мăшăр сăмахсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

## Çамрăклăх сăвви.

Çĕршывра сӳнми çăлкуçăн
яшлăх, çамрăклăх тапать.
Харсăр çамрăклăх! Тап
уççăн,
эсĕ тивĕç мухтава.
Çеçенхир, сăрт-ту, шыв-
шурĕ,
сывлăш, тинĕс,
вăрмансем,—
пур çĕрте те сăвă-юрă,
янăраççĕ юрăсем.
Заводра та, уй-хирте те
эп куратăп, эп илтетĕп,—
çуркунне пек пур çĕрте те

çамрăклăх вĕрет пирте.
Хум-шавпа карап пырать-и,
парашют-и карăнать,—
пур çĕрте те-çке куратăп,
яшлăх, çамрăклăх, сана.

Çĕнтерӳллĕн утăмлатпăр
Ленин—Сталин çулĕпе.
Çĕршыв аслă, çулĕ такăр.
Аслă çулпуç пирĕнпе.

***35-мĕш хăнăхтару.*** Тăван чĕлхепе вуламалли кĕнекерен „Пуканесен бригади“ ятлă сăвва вуласа тухăр. Сăвăра тĕл пулакан хутлă сăмахсене уйрăммăн, мăшăр сăмахсене уйрăммăн çырса илĕр.

***36-мĕш хăнăхтару.*** Çак хутлă сăмахсем мĕнле пулнине ăнлантарса парăр.

*Кăçал, кĕçĕр, питçăмарти, куçхаршu, кĕрçuп, турахуп, умсăмах, тымарçимĕç, çĕрмамăк, чĕрчун, алшăлли, кайăкхур, улмуççи, çăраççи, уйпуç, çутçанталăк, малъен, алкум, аслати.*

***37-мĕш хăнăхтару.*** Çак мăшăр сăмахсене кĕртсе предложенисем тăвăр.

Йăл-йăл, уй-хир, пит-куç, кайăк-кĕшĕк, выльăх-чĕрлĕх, шăнкăр-шăнкăр, шăпăр-шăпăр, хăлтăр-халтăр.

Тĕслĕх: *Шăпăр-шăпăр çумăр çăвать.*



***38-мĕш хăнăхтару.*** **Картина тăрăх çырнă çак пĕчĕк калава** çырса илĕр. Хутлă сăмахсене пĕр йĕрпе, мăшăр сăмахсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

## Çуркуннехи вăрман.

Çуркунне вăрман хĕл ыйхинчен вăранать. Йывăççем симĕс çулçăсем кăлараççĕ. Уçланкăсенче сарă-сарă, хĕрлĕ-хĕрлĕ, кĕрен-кăвак тата шурă чечексем илемлĕн курăнса лараççĕ. Вăрманта кайăк-кĕшĕк темĕн чухлех.

Вĕсен сасси-юррипе вăрман янăраса тăрать. Хăш чухне аслатиллĕ çумăр килсе çăвать. Анчах вăл нумая пымасть, часах иртсе каять. Çумăр хыççăн вăрманти çутçанталăк пушшех илемленет. Вăрманти çырмасем тăрăх шыв шăнкăр-шăнкăр! туса юхать.

*39-мĕш хăнăхтару.* Çак картина çине пăхса, хăвăр тĕллĕн „Кĕркуннехи вăрман" ятлă пĕчĕк калав çырăр.



## 4 §. Япала ячĕсем.

*40-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. ***Кам?*** е ***мĕн? камсем?*** е ***мĕнсем?*** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Павăл кĕнеке вулать. Маня çырать. Эпĕ задача шутлатăп. Анне мана пулăшать. Атте хаçат вулать. Пĕчĕк ачасем выляççĕ. Вĕсене пуканесем илсе панă.

*Павăл, Маня, анне, атте* сăмахсем ***кам?*** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

*Ачасем* сăмах ***камсем?*** ыйтупа ыйтăнать.

*Пуканесем* сăмах ***мĕнсем?*** ыйтупа ыйтăнать.

*Кĕнеке, задача, хаçат* сăмахсем ***мĕн?*** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

Çак сăмахсем пурте тĕрлĕ япаласен ятне пĕлтереççĕ.

*41-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. ***Кам? мĕн?*** ыйтусем выранне кирлĕ сăмахсене кĕртсе çырăр.

Пурана (*кам*?) пурать.
Тимĕре (*кам*?) шаккать.
Пулла (*кам*?) тытать.
Кĕрĕке (*кам*?) çĕлет.

Тырра (*камсем*?) выраççĕ.
Кĕлтене (*камсем*?) çыхаççĕ.
Шкулта (*камсем*?) вĕренеççĕ.
Тырра (*камсем*?) хураллаççĕ.

***42-мĕш хăнăхтару.*** а) Килти савăт-сапа ячĕсене, сĕтел-пукан ячĕсене çырăр. б) Выльăх-чĕрлĕхсен, тискер кайăксен, вĕçен кайăксен ячĕсене çырăр.

***43-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр пĕлекен ултă ял тата ултă хула ятне çырса хурăр. Кашни ял, хула ятне пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.

Тĕслĕх: *Етĕрне хули, Тивĕш ялĕ.*

***44-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр пĕлекен юханшывсен ячĕсене çырăр. Кашни юханшывăн ятне пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.

Тĕслĕх: *Пăла шывĕ, Сăрă шывĕ.*

***45-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр пĕлекен колхозсен ячĕсене çырăр. Кашни колхоз ятне пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.
Тĕслĕх: *„Самолĕт“ колхоз, „Трактор“ колхоз.*

***46-мĕш хăнăхтару.*** „Çумăр хыççăн“ ятлă сăвăран çутçанталăкри пулăмсене пĕлтерекен сăмахсене çырса илĕр.

## Çумăр хыççăн.

Акă тăвăл чарăнать,
аслати те йăвашрах.
Вăйлă çумăр тек çумасть—
уя тухас хăвăртрах.
Ытла аван, пит тӳлек
çумăр хыççăн улăхра.

Хаяр тăвăл пулман пек,
аслати те аякра.
Пĕлĕт хĕрри уçăлать,
çиçĕм çурмасть сывлăша.
Пăх, асамат кĕперри—
мĕн пур ун пек чиперри?

Çынсене, чĕрчунсене, тĕрлĕ хатĕрсене, çĕр-шыври пулăмсене грамматикăра пурне те **япала** теççĕ.

Тĕрлĕ япаласен ятне пĕлтерекен сăмахсене **япала ячĕсем** теççĕ.

***47-мĕш хăнăхтару.*** „Ака çинче“ ятлă сăвăран этеме пĕлтерекен сăмахсене тата чĕрчунсемпе чĕрĕ мар япаласене пĕлтерекен сăмахсене çырса илĕр.

## Ака çинче.

Вăшăлтатать ăшă çил—
юлашки юр ирĕлет.
Хĕвел панă çĕнĕ пил
çĕре-шыва чун кĕртет.

Вată йăмра сарăлса
урам туллин ешерет.
Вĕлле хурчĕ, пыл пухса
ун тăрринче сĕрлешет.

Таса уйра—ял тавра
этем сасси ĕрлешет,
халăх унта акара
тырă акать, сӳрелет.

Симĕс вăрман хушшинчен
куккук сасси илтĕнет.
Çерем çинче, улăхра,
путек сурăх сиккелет.

*48-мĕш хăнăхтару.* Асăрхăр: хăçан *кам?* тесе, хăçан *мĕн?* тесе ыйтаççĕ?

Кам калаçать?—Çын. Кампа вылятăн?—Яккупа.
Мĕн авăтать?—Автан. Мĕнпе вылятăн?—Пӳскепе.

Этеме пĕлтерекен япала ячĕсене *кам? камăн? кама? кампа? камра? камран?* тесе ыйту параççĕ, ытти япала ячĕсене *мĕн? мĕнĕн? мĕне? мĕнпе? мĕнре? мĕнрен?* тесе ыйту параççĕ.

Япала ячĕсем икĕ хисепре пулма пултараççĕ: пĕрреллĕ хисепре тата нумайлă хисепре пулаççĕ.

Пĕрреллĕ хисеп япала пĕрре анчах пулнине е япаласен пĕр пĕтĕм ушкăнне пĕлтерет: лаша, урапа, пӳрт, юлташ, ял, халăх.

Нумайлă хисеп икĕ япалана е япаласем нумайййине пĕлтерет: лашасем, урапасем, пӳртсем, юлташсем, ялсем, хуласем.

Нумайлă хисеп сăмах тĕпĕ çумне *-сем* аффикс хушăннипе пулать.

## 5 §. Япала ячĕсен хисепĕсем.


кишĕр


кишĕрсем


чăх


чăхсем


кролик


кроликсем


кăвакарчăн


кăвакарчăнсем

*49-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта панă сăмахсенчен малтан япала пĕрре анчах пулнине пĕлтерекен сăмахсене, кайран япаласем нумайййине пĕлтерекен сăмахсене çырса илĕр.



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Пӳртсем, хӑяр, капансем, сурӑх, ӗне, качакасем, хурӑн, чӑрӑш, йӑмрасем, ачасем, вӑрман, пӗве, тырӑсем, шывсем.

*50-мӗш хӑнӑхтару.* „Тӑри юрри" ятлӑ сӑвӑран нумайлӑ хисеплӗ япала ячӗсене ҫырса илӗр.

## Тӑри юрри.

Ҫак ҫӗршыва асилтӗм,
хӑвӑрт вӗҫсе эп килтӗм;
пин ҫухрӑмсем ярӑнтӑм,
тем те курса савӑнтӑм.

Ялсем, шывсем, вӑрмансем
тӑра-тӑра юлчӗҫӗ;
чӗрӗлекен хир-уйсем
мана курса кулчӗҫӗ.

Ушкӑн-ушкӑн арҫынсем
акаҫҫӗ те сӳреҫҫӗ,
хӗрарӑмсем, ачасем
пахчасенче ӗҫлеҫҫӗ.

Манӑн ҫӑмӑл юррӑмсем
янтра-янтра юлчӗҫӗ.
Ӑна илтсе, ҫыннисем
савӑнӑҫпа тулчӗҫӗ.

*51-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак япала ячӗсене нумайлӑ хисепре туса ҫырӑр. Нумайлӑ хисепри япала ячӗсен аффиксӗсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Ача — ача**сем**.
калча — ...
кӗлте — ...
вӗлле — ...
турат — ...
кӗтӳ — ...
тӑри — ...
урай — ...

куккукӑн — кукку**ксен(ӗн)**
куракӑн — ...
автанӑн — ...
мулкачӑн — ...
чавкан(ӑн) — чавка**сен(ӗн)**
путенен — ...
ҫырман(ӑн) — ...
сарайӑн — ...

*52-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене, паллӑ тунӑ япала ячӗсене нумайлӑ хисепре туса, улӑштарса ҫырса илӗр

1. Пирӗн ялта **йывӑҫ** нумай.
2. Ҫулла, вӑрманта ҫӳренӗ чухне, **выльӑх** мӑнтӑр.
3. Колхоз пахчинче **ҫимӗҫ** йышлӑ.
4. Вӗренекенӗн, **рабочи** пекех, ӗҫе вӑхӑтра тытӑнмалла.
5. Колхоз вӑрлӑха тасатса хатӗрлерӗ.
6. Совет Союзӗнче тӗрлӗ халӑх пурӑнать: **вырӑс, тутар, чӑваш, мари** тата ыттисем те.

## 6 §. Япала ячĕсен падежĕсем.

*53-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяран паллă тунă **ял** сăмаха пур предложенисенчен те çырса илĕр, сăмахĕсене пĕр-пĕрин айне туса çырăр. Кашни сăмахпа юнашар скобкăра унăн ыйтăвне лартăр.

Тĕслĕх: *ял (мĕн?)*

**Пирĕн ял.**

Пирĕн ял вăрман хĕрринче ларать. Ялăн урамĕсем тӳп-тӳрĕ, илемлĕ. Яла кĕнĕ çĕртех шкул ларать. Ялпа юнашар пĕчĕк шыв юхса выртать. Ялта йывăç пахчисем нумай. Ялтан инçе мар чугун çул станцийĕ пур.

| | | |
|---|---|---|
| 1. **Кам** вĕренет? | *йăмăк* | *ача* |
| 1. **Мĕн** ӳсет? | *хурăн* | *çăка* |
| 2. **Камăн** кĕнеке пур? | *йăмăк-ăн* | *ача-н(ăн)* |
| 2. **Мĕнĕн** çулçă пур? | *хурăн-ăн* | *çăка-н(ăн)* |
| 3. **Кама** тетрадь панă? | *йăмăк-а* | *ача-на* |
| 3. **Мĕне** çумăр кирлĕ? | *хурăн-а* | *çăка-на* |
| 4. **Кама** куртăн? | *йăмăк-а* | *ача-на* |
| 4. **Мĕн** куртăн? | *хурăн* | *çăка* |
| 5. **Кампа** лартăн? | *йăмăк-па* | *ача-па* |
| 5. **Мĕнпе** савăнатăн? | *хурăн-па* | *çăка-па* |
| 6. **Камра** линейка? | *йăмăк-ра* | *ача-ра* |
| 6. **Мĕнре (ăçта)** сухăр çук? | *хурăн-та* | *çăка-ра* |
| 7. **Камран** хут илтĕн? | *йăмăк-ран* | *ача-ран* |
| 7. **Мĕнрен** арча турăн? | *хурăн-тан* | *çăка-ран* |

Япала ячĕсем **кам? мĕн? камăн? мĕнĕн? кама? мĕне? мĕн? кампа? мĕнпе? камра? мĕнре? ăçта? камран? мĕнрен? ăçтан?** ыйтусем тăрăх улшăнаççĕ.

Япала ячĕсен çакăнта кăтартнă ыйтусенчен килекен кашни формине **падеж** теççĕ.

Япала ячĕсем падежсем тăрăх улшăннине **вĕçленни** теççĕ.

Падежсем çиччĕ:

1. **Ят падежĕ,** унăн ыйтăвĕсем *кам? мĕн?*
2. **Камăнлăх падежĕ,** „ *камăн? мĕнĕн?*
3. **Пару падежĕ,** „ *кама? мĕне? ăçта?*
4. **Тăву падежĕ,** „ *кама? мĕне? мĕн?*
5. **Пĕрлелĕх падежĕ,** „ *кампа? мĕнпе?*

| 6. **Вырӑн падежӗ,** | „ | *камра? мӗнре? ӑҫта?* |
|---|---|---|
| 7. **Туху падежӗ,** | „ | *камран? мӗнрен? ӑҫтан?* |

***54-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене вуласа тухӑр, кашни предложенире **юр** сӑмахӑн падежне тата унӑн ыйтӑвне кӑтартса парӑр.

Шур юр ҫӑвать те ҫӑвать. Пӗтӗм хир **юрпа** витӗнчӗ. Эпир шкула утатпӑр. **Юрӑн** ҫемҫе пӗрчисем пирӗн тумтир ҫине лараҫҫӗ. Шкула ҫитрӗмӗр. Тумтир ҫинчи **юра** сиплерӗмӗр. Шкултан таврӑнсан, эпир **юртан** кӗлетке тумалла вылярӑмӑр.

***55-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫакӑнта кӑтартнӑ сӑмахсемпе предложенисем тӑвӑр. Пулнӑ предложенисене ҫырса хурӑр. Кӑтартнӑ сӑмахӑн кашни форми ҫине падеж ятне, ыйтӑвне ҫырса хурӑр.

Вырӑн п. ӑҫта?

Тӗслӗх: *Ачасем шкулта вӗренеҫҫӗ.*

| | |
|---|---|
| шкула | ҫырма |
| шкулта | ҫырмара |
| шкул | ҫырмана |
| шкултан | ҫырмаран |
| шкулпа | ҫырмапа |
| шкулӑн | ҫырман |

# 7 §. Хупӑ сасӑпа пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни.

Вӗҫленӗвӗн тӗслӗхӗсем.

Пӗрреллӗ хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. Кам? | *юлташ* | *пӗлӗш* |
| К. Камӑн? | *юлташӑн* | *пӗлӗшӗн* |
| П. Кама панӑ? | *юлташа* | *пӗлӗше* |
| Т. Кама куртӑн? | *юлташа* | *пӗлӗше* |
| Пӗр. Кампа? | *юлташпа* | *пӗлӗшпе* |
| В. Камра? | *юлташра* | *пӗлӗшре* |
| Тух. Камран? | *юлташран* | *пӗлӗшрен* |

Нумайлӑ хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. Камсем? | *юлташсем* | *пӗлӗшсем* |
| К. Камсен(ӗн)? | *юлташсен(ӗн)* | *пӗлӗшсен(ӗн)* |
| П. Камсене премипанӑ? | *юлташсене* | *пӗлӗшсене* |

| | | |
|---|---|---|
| Т. Камсене куртăн? | *юлташсене* | *пелешсене* |
| Пĕр. Камсемпе? | *юлташсемпе* | *пĕлĕшсемпе* |
| В. Камсенче? | *юлташсенче* | *пĕлĕшсенче* |
| Тух. Камсенчен? | *юлташсенчен* | *пĕлĕшсенчен* |

***Л, н, р*** сасăпа пĕтекен сăмахсем вырăн падежĕпе туху падежĕнче ***ра, ре, ран, рен*** аффикссем вырăнне ***та, те, тан, тен*** аффикссене йышăнаççĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. Мĕн ўсет? | *йывăç* | *кишĕр* | *палан* |
| К. Мĕнĕн турачĕ? | *йывăç**ăн*** | *кишĕр**ĕн*** | *палан**ăн*** |
| П. Мĕне ăшă кирлĕ? | *йывăç**а*** | *кишĕр**е*** | *палан**а*** |
| Т. Мĕн(е) курнă? | *йывăç(**а**)* | *кишĕр(**е**)* | *палан(**а**)* |
| Пĕр. Мĕнпе? | *йывăç**па*** | *кишĕр**пе*** | *палан**па*** |
| В. Мĕнре? | *йывăç**ра*** | *кишĕр**те*** | *палан**та*** |
| Тух. Мĕнрен? | *йывăç**ран*** | *кишĕр**тен*** | *палан**тан*** |

Хытă сăмахсен падеж аффиксĕсем те хытă пулаççĕ. Çемçе сăмахсен падеж аффиксĕсем те çемçе пулаççĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. | *çеçпĕл* | *хурлăхан* | *хăяр* |
| К. | *çеçпĕл-**ĕн*** | *хурлăхан-**ăн*** | *хăяр-**ăн*** |
| П. | *çеçпĕл-**е*** | *хурлăхан-**а*** | *хăяр-**а*** |
| Т. | *çеçпĕл(**е**)* | *хурлăхан(-**а**)* | *хăяр(-**а**)* |
| Пĕр. | *çеçпĕл-**пе*** | *хурлăхан-**па*** | *хăяр-**па*** |
| В. | *çеçпĕл-**те*** | *хурлăхан-**та*** | *хăяр-**та*** |
| Тух. | *çеçпĕл-**тен*** | *хурлăхан-**тан*** | *хăяр-**тан*** |

| | | |
|---|---|---|
| Ят. Мĕнсем? | *йывăç**сем*** | *çĕмел**сем*** |
| К. Мĕнсен(ĕн)? | *йывăç**сен**(**ĕн**)* | *çĕмел**сен**(**ĕн**)* |
| П. Мĕнсене? | *йывăç**сене*** | *çĕмел**сене*** |
| Т. Мĕнсем, мĕнсене? | *йывăç**сем**(**сене**)* | *çĕмел**сем**(**сене**)* |
| Пĕр. Мĕнсемпе? | *йывăç**семпе*** | *çĕмел**семпе*** |
| В. Мĕнсенче? | *йывăç**сенче*** | *çĕмел**сенче*** |
| Тух. Мĕнсенчен? | *йывăç**сенчен*** | *çĕмел**сенчен*** |

Япала ячĕсене нумайлă хисепре вĕçленĕ чухне сăмах тĕпĕ çумне малтан ***сем*** аффикс, унтан падеж аффиксĕ хушăнать.

Камăнлăх, пару, тăву, вырăн, туху падежĕсенче ***сем*** аффикс вырăнне ***сен*** аффикс пулать.

Нумайлă хисепĕн падеж аффиксĕсем пур сăмахсен те пĕр пекех çемçе пулаççĕ.

*56-мĕш хăнăхтару.* Тĕслĕхсене пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

арман, йĕлтĕр, тумтир, сехет, курăк, пўлĕм.

*57-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ падеж аффиксĕсене çырăр.

### Кĕрĕк.

Манăн кĕрĕк çĕнĕ. Кĕрĕк... мана кăçал çĕлетсе пачĕç. Кĕрĕк... çухине путек тирĕнчен туса пачĕç. Халĕ эпĕ шкула кĕрĕк... çўретĕп. Кĕрĕк... эпĕ тирпейлĕ тытатăп: йĕпетместĕп, вараламастăп. Шкула çитсен, кĕрĕк... хывса çакатăп.

## 8 §. *А, е* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

### Вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсем.

| | |
|---|---|
| Ят. *арча* | *кĕпе* |
| К. *арча-н(ăн)* | *кĕпе-н(ĕн)* |
| П. *арча-на* | *кĕпе-не* |
| Т. *арча(на)* | *кĕпе(не)* |
| Пĕр. *арча-па* | *кĕпе-пе* |
| В. *арча-ра* | *кĕпе-ре* |
| Тух. *арча-ран* | *кĕпе-рен* |

*А, е* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем камăнлăх падежĕнче ***н(ăн), н(ĕн)*** аффикссем, пару падежĕнче (хăш чухне тăву падежĕнче те) ***на, не*** аффикссем йышăнаççĕ.

*58-мĕш хăнăхтару.* Тĕслĕхсене пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

çава, эрне, юпа, вĕрене.

*59-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ падеж аффиксĕсене çырăр.

### Купăста.

Купăста—питĕ усăллă çимĕç. Купăста . . . этеме кирлĕ япаласем нумай. Пахчара эпир çулсеренех купăста лартса ўстеретпĕр. Купăста... шăварса тăратпăр, купалатпăр. Купăста.. . тăварласа та, тăварламасăр яшка

çине ярса пĕçерсе те çиетпĕр. Тӳнĕ купăста. . . кукăль тăватпăр.

*60-мĕш хăнăхтару.* Кĕрпе сăмаха тĕрлĕ падежра лартса, предложенисем тăвăр.

## 9 §. *У, ӳ* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

Вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсем.

| | |
|---|---|
| Ят. *ăмăрту* | *вĕренӳ* |
| К. *ăмăртăв-ăн* | *вĕренĕв-ĕн* |
| П. *ăмăртăв-а* | *вĕренĕв-е* |
| Т. *ăмăрту* (*ăв-а*) | *вĕренӳ* (*ĕв-е*) |
| Пĕр. *ăмăрту-па* | *вĕренӳ-пе* |
| В. *ăмăрту-ра* | *вĕренӳ-ре* |
| Тух. *ăмăрту-ран* | *вĕренӳ-рен* |

*У*, *ӳ* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен камăнлăх падежĕнче тата пару, тăву падежĕсенче вĕçĕнчи *у*, *ӳ* сасăсем вырăнне ***ăв***, ***ĕв*** пулать.

*61-мĕш хăнăхтару.* Вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсене пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

çыру, чĕну, çыхăну, çĕнтерӳ, ăру, пĕлӳ.

*62-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Точкăсем вырăнне, пуху сăмах çумне, кирлĕ падеж аффиксĕсене çырăр.

### Пуху.

Паян колхозăн пуху ... пулчĕ. Пуху ... çын нумай пуçтарăнчĕ. Пуху председательне Иванов юлташа суйларĕç. Пуху ... çуракине хатĕрленесси çинчен сӳтсе яврĕç. Пуху ... тухсан, çынсем кино курма кайрĕç.

## 10 §. *Ă, ĕ* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

Вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсем.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. *пулă* | *кĕвĕ* | *хурçă* |
| К. *пул-л-лăн* | *кĕв-в-ĕн* | *хурç-ăн* |
| П. *пул-л-а* | *кĕв-в-е* | *хурç-а* |

| | | |
|---|---|---|
| Т. *пулă (пул-л-а)* | *кĕв-в-е* | *хурçă (хурç-а)* |
| Пĕр. *пулă-па* | *кĕвĕ-пе* | *хурçă-па* |
| В. *пулă-ра* | *кĕвĕ--ре* | *хурçă-ра* |
| Тух. *пулă-ран* | *кĕвĕ-рен* | *хурçă-ран* |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. *пулă-сем* | *кĕвĕ-сем* | *хурçă-сем* |
| К. *пулă-сен-ĕн* | *кĕвĕ-сен-ĕн* | *хурçă-сен-ĕн* |
| П. *пулă-сене* | *кĕвĕ-сен-е* | *хурçă-сен-е* |
| Т. *пулă-сем(сене)* | *кĕвĕ-сем(сене)* | *хурçă-сем(сене)* |
| Пĕр. *пулă-сем-пе* | *кĕвĕ-сем-пе* | *хурçă-сем-пе* |
| В. *пулă-сен-че* | *кĕвĕ-сен-че* | *хурçă-сен-че* |
| Тух. *пулă-сен-чен* | *кĕвĕ-сен-чен* | *хурçă-сен-чен* |

*А*, *ĕ* уçă сасăсемпе пĕтекен аффикссăр япала ячĕсен *ă*, *ĕ* умĕнче пĕр хупă сасă анчах тăрать пулсан, çав хупă сасă камăнлăх падежĕнче тата пару, тăву падежĕсенче пĕрреллĕ хисепре вăрăмланать; нумайлă хисепре вăрăмланмасть: *ă*, *ĕ* умĕнче икĕ хупă сасă тăрать пулсан, хупă сасăсем пĕррелле хисепре те вăрăмланмаççĕ.

***63-мĕш хăнăхтару.*** Вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсене пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

алă, сăвă, тилĕ, сĕлĕ, хуралçă, пуртă, пĕкĕ, тупă.

***64-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Тулă сăмах çумне кирлĕ падеж аффиксĕсене çырăр. Камăнлăх тата пару, тăву падежĕсенче *л* сасса вăрăмлатса çырăр.

## Тулă.

Революциччен пирĕн енче тулă... акманпа пĕрех. Пирĕн енче тулă пулмасть тесе шухăшланă. Колхозсем организациленĕ хыççăн, тулă... ытларах та ытларах ака пуçларĕç. Тулă питĕ паха тырă. Тулă... çăнăх та кĕрпе те пулать.

***65-мĕш хăнăхтару.*** Кӳлĕ ятлă статьяна çырса илĕр. Кӳлĕ сăмах çумне кирлĕ падеж аффиксĕсене лартса пырăр. Камăнлăх тата пару, тăву падежĕсенче *л* сасса вăрăмлатса çырăр.

## Кӳлĕ.

Пирĕн колхоз çĕр чавса пысăк кӳлĕ тунă. Кӳлĕ... тĕрлĕ пулăсем янă. Çуллахи хĕвеллĕ кунсенче кӳлĕ...

пулăсем выляни курăнать. Кӳлĕ... тĕпĕ хăйарлă. Эпир çулла час-часах кӳлĕ... шыва кĕретпĕр. Шăрăх кунсенче кӳлĕ... тухас та килмест. Хĕлле кӳлĕ шăнать. Вара эпир кӳлĕ... пăрĕ çине конькипе ярăнма çӳретпĕр.

***66-мĕш хăнăхтару.*** 67-мĕш задачăри пекех тăвăр. **Вăрçă** сăмахра *ă* сасă умĕнче икĕ хупă сасă тăрать, çавăнпа вĕсем вăрăмланмаççĕ.

## Вăрçа хирĕç.

Августăн пĕрремĕш кунĕ—вăрçă... хирĕç кун. Çав кун пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем вăрçă... хирĕç митингсем, демонстрацисем туса ирттереççĕ. Вăрçă... сиенĕ нимрен ытла ĕççыннине тивет. Вăрçă ... темĕн чухлĕ ĕççынни айăпсăр вилет.

Эпир вăрçасшăн пулман, анчах эпир вăрçă... хăраман, хăрамастпăр та. Тăшман пирĕн çине тапăнчĕ пулсан, эпир ăна çапса аркататпăр тата тĕппипех пĕтеретпĕр.

***67-мĕш хăнăхтару.*** Пулăçă, кĕтӳçĕ сăмахсем мĕнле вĕçленнине асăрхăр.

| | |
|---|---|
| Ят. *пулăçă* | *кĕтӳçĕ* |
| К. *пулăç-ăн* | *кĕтӳç-ĕн* |
| П. *пулăç-а* | *кĕтӳç-е* |
| Т. *пулăç-а* | *кĕтӳç-е* |
| Пĕр. *пулăçă-па* | *кĕтӳçĕ-пе* |
| В. *пулăçă-ра* | *кĕтӳçĕ-ре* |
| Тух. *пулăçă-ран* | *кĕтӳçĕ-рен* |

*А*, *ĕ* уçă сасăсемпе пĕтекен **аффикслă** сăмахсенче *ă*, *ĕ* умĕнче пĕр хупă сасă анчах тăрать пулсан та, сăмаха вĕçленĕ чухне çав хупă сасă вăрăмланмасть.

## 11 §. *И* уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. Мĕн ӳсет? | *пăри* | *тăри* |
| К. Мĕнĕн? | *пăри-н* (***йĕн***) | *тăри-н* (***йĕн***) |
| П. Мĕне? | *пăри-е* | *тăри-е* |

| | | |
|---|---|---|
| Т. Мĕн(е)? | *пăри(е)* | *тăри(е)* |
| Пĕр. Мĕнпе? | *пăри-пе* | *тăри-пе* |
| В. Мĕнре (ăçта)? | *пăри-ре* | *тăри-ре* |
| Тух. Мĕнрен (ăçтан)? | *пăри-рен* | *тăри-рен* |

***И*** уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем камăнлăх падежĕнче ***н*** е ***йĕн*** аффикс йышăнаççĕ, пару, тăву падежĕсенче ***е*** аффикс йышăнаççĕ. Аффикссем пур падежсенче те çемçе пулаççĕ (***и*** сасă çемçе уçă сасă пирки).

***68-мĕш хăнăхтару.*** Пăри, тăри сăмахсем мĕнле вĕçленнине пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

**Кĕркури, Варвари, çерçи, шăши.**

***69-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Пăши сăмах тĕрлĕ предложенисенче хăш падежра тăнине каласа парăр.

**Пăши.**

Вăрманта **пăши** çӳренĕ. **Пăшие** сунарçă курнă. **Пăши** те сунарçа сиснĕ. **Пăшийĕн** урисем çивчĕ. **Пăшие** вĕсем тискер кайăксенчен, этемрен тарса хăтăлма пулăшаççĕ. Сунарçă **пăширен** аякра та мар пулнă. Анчах, сунарçă пăшалне çĕклесе иличчен, **пăши** тапса сикнĕ те куçран çухалнă.

## 12 §. *Й* сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

| | |
|---|---|
| Ят. *сарай* | *телей* |
| К. *сарай-ăн* | *телей-ĕн* |
| П. *сара-я* | *теле-е* |
| Т. *сарай(я)* | *телей(е)* |
| Пĕр. *сарай-па* | *телей-пе* |
| В. *сарай-ра* | *телей-ре* |
| Тух. *сарай-ран* | *телей-рен* |

***Й*** сасăпа пĕтекен хытă сăмахсем пару, тăву падежĕсенче ***я*** аффикс йышăнаççĕ, çемçе сăмахсем ***е*** аффикс йышăнаççĕ, ***й*** саспалли ку падежсенче ***а, э, у*** саспаллисемпе пĕрлешет: йотованнăй текен ***я, е, ю*** саспаллисем пулса тăраççĕ.

*70-мĕш хăнăхтару.* Сарай, телей япала ячĕсем мĕнле вĕçленнине пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

какай, сăрнай, вăй, чей, туй, мăй.

*71-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Уй сăмах кашни предложенире мĕнле падежра тăнине, унăн ыйтăвне кăтартса парăр.

## Колхоз уйĕ.

Уя тухрăм, ай уй куртăм,—
уйăн вĕçĕ-хĕрри те çук.
Уйпа утса эп савăнтăм,
тулли-сĕлли ай пулнă чух.
Йăрансăр уй ай куç тулли,
таçта çити ай сарăлать.
уйра ылттăн пек сар тулли
сар тинĕс пек ай хумханать

*72-мĕш хăнăхтару.* Вăй сăмаха тĕрлĕ падежра лартса, предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх: Вăя хурса ĕçле.

*73-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенче паллă тунă сăмахсем мĕнле падежра тăнине тата ыйтуне кăтартса парăр.

1. Эпĕ хăмаран шăнкăрч йăви турăм.
2. Ачасем уйра йĕлтĕрпе ярăнаççĕ.
3. Лаша колхоза пысăк усă парать.
4. Трактор лашаран темиçе хут вăйлăрах.
5. Сортлă тырă пысăк тухăç парать.
6. Радио çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет.
7. Пирĕн çĕршывра ĕççынни телейлĕ пурăнать.
8. Пирĕн çĕршыв, пирĕн халăх нихăçан та гитлерла вăрă-хурахсене пăхăнас çук.

# 13 §. Япала ячĕсем предложенире подлежащи е кĕçĕн член пулни.

Япала ячĕсем предложенире **подлежащи** е **кĕçĕн член** пулаççĕ.

*74-мĕш хăнăхтару.* Чертĕжсемпе кăтартнă предложенисене пăхса тухăр. Кашни уйрăм предложенире хĕл сăмах мĕнле член пулса тăрать? Пирвайхи предложенире мĕнле ыйтупа ыйтăнать? Иккĕмĕш предложенире?




*75-мӗш хăнăхтару.* а) Çак статьяна вуласа тухăр. **Завод** сăмах кашни предложенире мӗнле улшăннине асăрхăр.

**Завод** сăмах подлежащи пулса тăракан предложенисене çырса илӗр.

## Завод.

Пирӗн ял çывăхӗнче **завод** ларать. Вăл **завод** крахмал туса кăларать. **Заводра** ман пичче те ӗçлет. Эпӗ пичче патне **завода** темиçе те кайса курнă. **Заводăн** çурчӗсене электричество çутатать. **Заводăн** машинисем электричествăпа ӗçлеççӗ.

*76-мӗш хăнăхтару.* Çак статьяран **пахча** сăмах кӗçӗн член пулса тăракан предложенисене çырса илӗр.

## Пахча.

Пирӗн пысăк мар **пахча** пур. **Пахчан** усси питӗ пысăк. Çуркунне **пахчана** эпир тӗрлӗ çимӗçсем лартатпăр. Пирӗн **пахчара** арбуз та ӳсет. Кӗркунне **пахчаран** тӗрлӗ çимӗç хӗл каçмалăхах пухса илетпӗр.

*77-мӗш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр, **ӗç** сăмах хăш предложенире подлежащи, хăш предложенире кӗçӗн член пулнине кăтартса парăр.

## Ӗç.

Ӗлӗк **ӗç** çынна тарăхтарнă. Пирӗн **ӗçпе** ӗлӗк капиталистсемпе помещиксем пуйса пынă.

Халь ӗççыннине **ӗç** хаваслантарать. **Ӗç** пире телейлӗ пурăнма май парать. **Ӗç** çӗршыва тӗреклетет. Эпир **ӗçе** хисеплетпӗр. **Ӗçпе** мухтава тухатпăр.

*78-мӗш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илӗр. Паллă тунă япала ячӗсем мӗнле падежра тăнине тата вӗсем предложенире мӗнле член пулса тăнине кăтартса парăр.

Пирӗн çӗршыва коммунистсен **партийӗ** ертсе пырать. **Партире** пирӗн çӗршывăн чи лайăх ывăлӗ-хӗрӗ-

сем тăраççĕ. Чи лайăх ударниксем, стахановецсем **партие** кĕреççĕ. **Партин** вунсаккăрмĕш съезчĕ çĕнĕ устав йышăнчĕ. Пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕççынни **партие** юратса хисеплет.

> Ят падежĕнчи япала ячĕ предложенире **подлежащи** пулать. Ытти падежсенчи япала ячĕ предложенире **кĕçĕн член** пулать.

*79-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă япала ячĕсенчен хăшĕ ят падежĕнче, хăшĕ тăву падежĕнче тăраççĕ?

1. Сĕтел çинче **кĕнеке** выртать. Эпĕ Петĕре **кĕнеке** патăм.
2. Çырмана **юр** тулнă. Эпир нӳхрепе **юр** тултартăмăр.
3. Çырмара **шыв** юхать. Эпĕ **шыв** ăсса килтĕм.

> Ят падежĕнче тăракан япала ячĕпе тăву падежĕнче тăракан япала ячĕ час-часах форма енчен пĕр-пĕринпе пĕр пекех пулаççĕ. Вĕсене пĕр-пĕринчен икĕ майпа уйăрма пулать:
>
> 1. сăмах предложенире подлежащи пулать пулсан, вăл ят падежĕнче тăрать; çав формăри сăмахах предложенире кĕçĕн член пулать пулсан, вăл тăву падежĕнче тăрать;
>
> 2. ят падежĕнчи сăмахăн падеж аффиксĕ пулмасть, тăву падежĕнчи сăмахăн падеж аффиксĕ пулма пултарать. Сăмахран, „Сĕтел çинче кĕнеке выртать“ предложенире кĕнекене теме май килмест, иккĕмĕш предложенире „Эпĕ Петĕре кĕнекене патăм“, теме те май килет.

*80-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă япала ячĕсем хăшĕ пару падежĕнче, хăшĕ тăву падежĕнче тăнине кăтартса парăр.

1. Эпĕ **ĕнене** утă патăм. Эпĕ кĕтӳре **ĕнене** куртăм.
2. Эпĕ **сĕтеле** кĕнеке хутăм. Эпĕ **сĕтеле** куçарса лартрăм.
3. Эпĕ **шăнкăрча** йăва туса патăм. Эпĕ **шăнкăрча** куртăм.

> Пару падежĕнче тăракан япала ячĕ час-часах тăву падежĕнче тăракан япала ячĕпе пĕр формăллă

пулать. Ун пек чухне вӗсене пӗр-пӗринчен ҫапла уйӑрма пулать: пару падежӗнче тӑракан япала ячӗ падеж аффиксӗсӗр пулма пултараймасть, тӑву падежӗнче тӑракан япала ячӗн падеж аффиксне кӑларса пӑрахсан та предложенири шухӑш улшӑнмасть. Сӑмахран, „Эпӗ ӗне утӑ патӑм" теме май килмест: „Эпӗ кӗтӳре ӗне куртӑм" теме май килет.

## 14 §. *Та, те, тан, тен* аффикссене ҫырасси.

*81-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Мӗнле сӑмахсенче *ра, ре, ран, рен* ҫырнине, мӗнле сӑмахсенче *та, те, тан, тен* ҫырнине асӑрхӑр.

1. Пирӗн атте **колхозран** лаша илчӗ те **вӑрмантан** вутӑ тиесе килчӗ. Аттепе пӗрле **вӑрманта** эпӗ те пултӑм.

2. Эпӗ **шкулта** вӗренетӗп. Атте **колхозра бригадирта** ӗҫлет. Пирӗн **килтен** виҫҫӗн вӗренеҫҫӗ.

3. Пирӗн **пӳртре** илемлӗ картинӑсем пур. **Тӗпелте** патефон ларать. **Кӗтесре** радио репродукторӗ пур.

4. Ман шӑллӑмӑн **букварь** пур. **Букварьте** тӗрлӗ картинӑсем нумай. Шӑллӑм **букваре** вулать. **Букварьтен** илемлӗ картинӑсем ӳкерсе илет.

*Л, н, р* сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем вырӑн падежӗнче *та, те,* туху падежӗнче *тан, тен* аффикссене йышӑнаҫҫӗ. Ытти сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем ҫак падежсенче *ра, ре, ран, рен* аффикссене йышӑнаҫҫӗ.

*Ль, нь, рь* сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем вырӑн падежӗнче *те,* туху падежӗнче *тен* аффикс йышӑнаҫҫӗ. Камӑнлӑх, пару падежӗнче, хӑшпӗр чухне туху падежӗнче ҫемҫетекен паллӑ (ь) тухса ӳкет (букварӗн, букваре; мӑкӑнӗн, мӑкӑне; кукӑлӗн, кукӑле).

*82-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне *ра, ре, ран, рен, та, те, тан, тен* аффикссенчен кирлине кӳртсе ҫырӑр.

1. Пахча... çимĕç нумай. 2. Кĕлет... тырă нумай. 3. Ачасем шкул... вĕренеççĕ. 4. Колхозниксем вăрман... тавăрăнаççĕ. 5. Пичче пасар... тавăрăнчĕ. 6. Çăка вĕрене... çемçерех. 7. Кĕпер.. анатарах мăн çурт ларать. 8. Хир... трактор сасси илтĕнчĕ. 9. Пирĕн кил... шкул аякра мар. 10. Пирĕн ял Шупашкар... аллă километрта ларать.

## 15 §. *Та* тата *те* татăксене çырасси.

*83-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене вуласа тухăр, вĕсенче *та, те* аффикссемпе пĕр пек уйрăм пĕчĕк сăмахсем пуррине асăрхăр.

1. Вăрманта йывăç нумай. Вăрман **та**, хир **те** чĕрĕлчĕ.

2. Ялта халь хут пĕлменнисем çукпа пĕрех. Ял **та** хула пекех культурăланса пырать.

3. Эпĕ килте час-часах радио итлетĕп. Кунтан пирĕн кил **те** инçе мар.

4. Кашни пинте вунă çĕр. Ленин пин **те** тăхăрçĕр çирĕм тăваттăмĕш çулта вилнĕ.

*Та, те* падеж аффиксĕсемпе пĕр пек *та* тата *те* пур. Вĕсене грамматикăра *союз* теççĕ. Вĕсем предложенире сăмахсене çыхăнтараççĕ е икĕ предложение пĕр-пĕринпе çыхăнтараççĕ.

*Та, те* падеж аффиксĕсене сăмахпа пĕрле çыпăçтарса çыраççĕ, пĕр йышши сăмахсене е предложенисене çыхăнтаракан *та, те* союзсене сăмахсенчен уйрăм çыраççĕ.

*84-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Скобкăра панă *та, те*-сене кирлĕ çĕрте сăмахпа пĕрле çыпăçтарса, кирлĕ çĕрте сăмахран уйрăм çырăр.

Çуркунне çывăхарать. Çĕр (те) кĕскелчĕ, хĕвел (те) ăшшине ытларах пара пуçларĕ. Ял (та) хĕрсе çуракине хатĕрленеççĕ. Колхозниксем (те), единоличниксем (те) ака хатĕрĕсене хатĕрлеççĕ. Акă часах юр (та) хускалĕ. Вăрман (та) кайăксен юрри янăра пуçлĕ. Хир (те) тракторсем кĕрлеме тапратĕç. Эпир (те) йĕлтĕрсене, конькисене пуçтарса хурăпăр.

***85-мĕш хăнăхтару.*** 84-мĕш хăнăхтарури пекех тăвăр.

1. Кашни ял (та) тенĕ пекех халĕ клуб е вуламалли çурт пур. 2. Ял (та) та, хулара (та) пысăк стройка пырать. 3. Совет Союзĕнчи пур халăх (та) пĕр тан правallă. 4. Хир (те) халь сухапуç тĕсне (те) курайман. 5. Атăл (та) пулă нумай. 6. Шкул çулне çитнисем пур (те) шкул (та) вĕренеççĕ. 7. Çуркунне хир (те), вăрман (та), улăх (та) чĕрĕлеççĕ. 8. Аякра-аякра, пит çÿл (те) аэроплан вĕçет.

## 16 §. Хăшпĕр хупă сасăсем пĕрпеклении.

***86-мĕш хăнăхтару.*** Статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсене каланипе çырни хушшинчи уйрăмлăха асăрхăр.

### Экскурси.

— **Юлташсем!** Паян эпир вăрмана экскурсие **каятпăр,**—терĕ пире учитель. Вăрманти **йывăççен,** чĕрчунсен хĕллехи пурăнăçне сăнама эпир экскурсие кайрăмăр. Вăрманпа **пыратпăр,** шакăлтатса **калаçатпăр. Йывăççем** çулçисене пĕтĕмпех тăкнă. **Йывăççен** турачĕсене пас тытнă. **Чăрăшсем,** хырсем йĕппиcене тăкман, ытти **йывăççем** хушшинче вĕсем сип-симĕссĕн курăнса лараççĕ. Акă пĕр йывăç çинчен пас тăкăнма пуçларĕ. „Кунта пакша йăви пулмалла",—терĕ учитель. Йывăç çинелле тинкерсе **пăхатпăр.** Часах пакшине те куртăмăр. Вăл пире йăви патĕнчен аяккалла илĕртсе **каясшăн,** йывăç çинчен йывăç çине сиксе пирĕнтен тарать.

Хăшпĕр хупă сасăсем, юнашар тăрсан, пĕрпекленеççĕ. *С* сасă *ш* сасăпа юнашар тăнă чухне *ш* сасă пек илтĕнет, *ç* сасăпа юнашар тăнă чухне *ç* сасă пек илтĕнет. *Т* сасă *п* сасă умĕнче тăнă чухне *п* сасă пек илтĕнет.

Çапла, юлташсем вырăнне юлташшем, каясшăн вырăнне каяшшăн, йывăççем вырăнне йывăççем, пыратпăр вырăнне пыраппăр илтĕнет. Анчах çырассине, сăмах пулăвне пăхса, **юлташсем, каясшăн, йывăççем, пыратпăр** тесе çырмалла.

*87-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене каланипе вĕсене çырни хушшинче мĕнле уйрăмлăх пуррине кăтартса парăр:

тантăшсем, пĕлĕшсем, хурăнташсем, карăшсем;
каясшăн, килесшĕн, çырасшăн, пĕлесшĕн, ÿсесшĕн;
вĕренесшĕн, ăмăртасшăн, палăртасшăн, пырасшăн;
чĕкеçсем, çимĕçсем, кавăрçсем, çăлкуçсем;
вулатпăр, çыратпăр, шутлатпăр, вĕренетпĕр, ĕçлетпĕр,
ăмăртатпăр.

*88-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсем мĕнле илтĕннине тата вĕсене мĕнле çырмаллине астăвăр.

| Калаççĕ: | Çыраççĕ: | Калаççĕ: | Çыраççĕ: |
|---|---|---|---|
| юлташшем | юлташсем | каяшшăн | каясшăн |
| пĕлĕшшем | пĕлĕшсем | килешшĕн | килесшĕн |
| хурăнташшем | хурăнташсем | пырашшăн | пырасшăн |
| тантăшшем | тантăшсем | илешшĕн | илесшĕн |
| чăрăшшем | чăрăшсем | чухлашшăн | чухласшăн |
| карăшшем | карăшсем | курашшăн | курасшăн |
| акăшшем | акăшсем | пуççем | пуçсем |
| вулашшăн | вуласшăн | çăлкуççем | çăлкуçсем |
| çырашшăн | çырасшăн | чĕкеççем | чĕкеçсем |
| пĕлешшĕн | пĕлесшĕн | куççем | куçсем |
| вĕренешшĕн | вĕренесшĕн | хăлаççем | хăлаçсем |
| ÿсешшĕн | ÿсесшĕн | каççем | каçсем |
| ăмăрташшăн | ăмăртасшăн | пиççе | пиçсе |
| уташшăн | утасшăн | куççа | куçса |
| чупашшăн | чупасшăн | çыпăçça | çыпăçса |
| килеппĕр | килетпĕр | каççерен | каçсерен |
| чĕнеппĕр | чĕнетпĕр | çыраппăр | çыратпăр |
| çÿреппĕр | çÿретпĕр | калаçаппăр | калаçатпăр |
| хавасланаппăр | хавасланатпăр | каçаппăр | каçатпăр |
| | | хĕпĕртеппĕр | хĕпĕртетпĕр |

## 17 §. Паллă ячĕсем.

*89-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта ÿкернĕ япаласем мĕнлине пĕлтерекен сăмахсене тупăр.

Тĕслĕх: *Кăвак лаша.*



. . . лаша. . . . ĕне. . . . мулкач.



. . . кашкăр. . . . тилĕ. . . . упа.

***90-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвва вуласа тухăр. Сăвăран япала мĕнлине пĕлтерекен сăмахсене япала ячĕсемпе пĕрле çырса илĕр.

Шартлама хĕл иртсе кайрĕ.
Çитрĕ ырă çуркунне.
Чĕвĕлти чĕкеç янратрĕ
хăйĕн савăк юррине.
Тăрă шыв юхать васкавлăн
ешĕл улăхваррипе.
Аслă хир кĕрлет янравлăн
хурçă трактор сассипе.

***91-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсем япалан мĕнле паллисене пĕлтернине каласа парăр.

1. **Хĕрӳ** хĕвел тухрĕ. 2. **Ялти** çынсем вăранчĕç. 3. **Çуркуннехи** çанталăк илемĕпе савăнтарать. 4. **Вăрманти** кайăксем **илемлĕ** юррисене шăрантараççĕ. **Аслă** хирте **ирхи** ĕç вĕрет.

Япала мĕнлине пĕлтерекен сăмахсене **паллă ячĕсем** теççĕ.

Паллă ячĕсем япала мĕнлине, ăçтине, хăçанхине

пӗлтерессӗ. Вӗсен ыйтӑвӗсем: *мӗнле? ӑçти? хӑçанхи? (илемлӗ юрӑ, вӑрманти кайӑк, архи ӗç).*

***92-мӗш хӑнӑхтару.*** Çак статьяна çырса илӗр. Паллӑ ячӗсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр. Кашни паллӑ ячӗ çине унӑн ыйтӑвне лартӑр.

## Çуркуннехи вӑрман.

Çуркуннехи вӑрман хӗллехи вӑрман пек мар. Йывӑççем симӗс, ачаш çулçӑсем кӑлараççӗ. Йывӑççен айӗнче илемлӗ чечексем çурӑлаççӗ. Савӑнӑçлӑ кайӑксен хаваслӑ юрри кӑмӑла çӗклентерет. Уçӑ сывлӑш кӑкӑра уçать. Мӗнпур чӗрчун хӗллехи ыйхӑран вӑраннӑ. Пурте ырӑ çуркуннене саваççӗ.

***93-мӗш хӑнӑхтару.*** Çак статьяра паллӑ тунӑ япала ячӗсене вӗсен умӗнче тӑракан, вӗсем мӗнлине пӗлтерекен паллӑ ячӗсемпе пӗрле çырса илӗр.

**Асӑрхӑр:** япала ячӗ улшӑннӑ май паллӑ ячӗ улшӑнать-и?

## Анлӑ Атӑл.

Темиçе пин километр юхса выртать анлӑ **Атӑл.** Анлӑ **Атӑлӑн** сылтӑм çыранӗ çӳллӗ, сулахай çыранӗ айлӑм. Анлӑ **Атӑлтан** пысӑкрах шыв Европӑра урӑх çук. Анлӑ **Атӑлта** темӗн тӗслӗ пулӑ пур. Анлӑ **Атӑл** тӑрӑх темӗн чухлӗ пароход, баржӑсем, кимӗсем çӳреççӗ, тавар турттараççӗ. Анлӑ **Атӑлӑн** çыранӗсем хӗррипе улӑхсем сарӑлса выртаççӗ.

Паллӑ ячӗ япала ячӗпе пӗрле тӑрать. Паллӑ ячӗ **падежсем тӑрӑх улшӑнмасть** (вӗçленмест).

***94-мӗш хӑнӑхтару.*** Çакӑнти япала ячӗсене кӑтартнӑ паллӑ ячӗсемпе пӗрле илсе вӗçлесе тухӑр. Паллӑ ячӗсем падежсем тӑрӑх улшӑннипе улшӑнманнине асӑрхӑр.

| | |
|---|---|
| Ят. Аслӑ хир. | Ирхи сывлӑм. |
| К. . . . . | . . . . . . . |
| П. . . . . | . . . . . . . |

***95-мӗш хӑнӑхтару.*** Çак тӗслӗхсене пӑхса тухӑр. Япала ячӗн хисепӗ улшӑннӑ май ун çумӗнчи паллӑ ячӗ улшӑнать-и?

Сарă кайăк.
Ешĕл калча.
Кăтра хурăн.
Тутлă улма.
Хĕрлĕ чечек.
Тарăн çырма.
Хирти тырă.
Хĕллехи çул.

Сарă кайăксем.
Ешĕл калчасем.
Кăтра хурăнсем.
Тутлă улмасем.
Хĕрлĕ чечексем.
Тарăн çырмасем.
Хирти тырăсем.
Хĕллехи çулсем.

*96-мĕш хăнăхтару.* Çак пĕрреллĕ хисепре тăракан сăмахсене нумайлă хисепе куçарăр.

Тĕслĕх: *Çурхи çилсем.*

Çурхи çил.
Çуллахи кун.
Лапсăркка хурăн.
Шурă чечек.
Хура вăрман.
Ватă йăмра.
Пысăк кӳлĕ.
Çирĕп юман.
Йăрансăр хир.
Çĕнĕ çурт.

Тĕрĕс сехет.
Уяр кун.
Атăлти сулă.
Улăхри хăмăш.
Çырмари хăва.
Çамрăк чăрăш.
Тутлă çырла.
Яка йĕлтĕр.
Вăрăм вĕрен.
Аслă урам.

Паллă ячĕсем хисепсем тăрăх та улшăнмаççĕ: *çĕнĕ* пӳрт, *çĕнĕ* пӳртсем.

*97-мĕш хăнăхтару.* Точкăсем вырăнне кирлĕ паллă ячĕсене лартса, çырса илĕр.

## Çуркунне

Килчĕ... çуркунне,
килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса
...вăрман чĕрĕлет,
...тумтир тăхăнать.
...хир те ешерет,
илемĕпе мухтанать.

...чечексен
...шăрши сарăлать.
Пур çĕрте те кайăксен,
...юрри янăрать.
Çӳлте, пĕлĕт айĕнче,
тăри юрри илтĕнет.
...курăк çийĕнче
путек-сурăх сиккелет.

Кирлĕ паллă ячĕсем: *тĕттĕм, ырă, тĕрлĕ-тĕрлĕ, лайăх, çемçе, çеçен, ырă, ешĕл.*

*98-мĕш хăнăхтару.* 97-мĕш хăнăхтарури пекех тăвăр.

## Çырма.

Çырма юхать кĕрлесе,
... ялăн çумĕпе.
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе,
вылять унăн шывĕпе.

... шывăн ăшĕнче
... пĕлĕт явăнать.
... йăмра тайăлса,
тĕсне пăхса савăнать.

Кирлĕ палла ячĕсем: *кăвак, ватă, тăрă, аслă.*

*99-мĕш хăнăхтару.* Çак япала ячĕсем çумне май килекен паллă ячĕсене тупăр. Тупнă паллă ячĕсене япала ячĕсемпе пĕрле çырса хурăр.

Çăлтăр. Çил. Çул. Кăвар. Лаша. Шăнкăрч. Автан. Кашкăр. Мулкач. Упа. Курак. Кăвакарчăн. Комбайн. Автомобиль. Трактор. Плуг. Сÿре. Сенĕк.

*100-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

Кăвак пĕлĕт. Вăрманти кайăк. Вăйлă çумăр. Аслă тинĕс. Такăр çул. Шыври пулă. Çурхи ĕç. Ирхи апат. Паянхи хаçат. Юлашки хыпарсем.

Тĕслĕх: Кăвак пĕлĕтре тăри юрă шăрантарать.

*101-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта кăтартнă тĕслĕхсене пăхса, хăвăр пĕрпекрех пĕлтерĕшлĕ палла ячĕсем тупăр.

1. Вăйлă, паттăр, хастар, çирĕп.
2. Хăюллă, харсăр, парăнусăр.
3. Илемлĕ,...
4. Хаваслă,...
5. Тирпейлĕ,...
6. Шанчăклă,...
7. Яштак,...
8. Лайăх,...

*102-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта кăтартнă паллă ячĕсене хирĕç пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем тупса çырăр.

Тĕслĕх: *Вĕри шыв—сивĕ шыв.*

Вĕри шыв.
Вăйлă çил.
Уяр кун.
Ăшă çанталăк.
Тарăн кÿлĕ.
Ансăр урам.

Çамрăк лаша.
Пысăк ĕне.
Çăмлă сурăх.
Ăратлă сысна.
Пĕчĕк путек.
Пысăк пахча.

Тÿрĕ çул.
Анлă улăх.
Çĕнĕ пÿрт.
Çывăхри ял.
Тăрă шыв.
Шывлă çырма.

*103-мĕш хăнăхтару.* Сулахай енчи паллă тунă сăмахсене çырнине сылтăм енчи паллă тунă сăмахсене çырнипе танлаштарăр.

| | |
|---|---|
| *Анлă* кÿлĕ | *Пулăллă* кÿлĕ |
| *Çăмлă* сурăх | *Мăйракаллă* сурăх |
| *Пĕлĕтлĕ* кун | *Тĕтреллĕ* кун |
| *Ăслă* пионер | *Пултаруллă* пионер |
| *Тирпейлĕ* çурт | *Йĕркеллĕ* çурт |
| *Хастарлă* сын | *Хăюллă* сын |
| *Илемлĕ* йывăç | *Çулçăллă* йывăç |
| *Хаваслă* ĕç | *Ăмăртуллă* ĕç |

*Лă, лĕ* аффикс хушăннипе пулнă паллă ячĕсенче сăмах тĕпĕ уçă сасăпа пĕтет пулсан, ***ллă*** е ***ллĕ*** çырмалла.

*104-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне *лă, лĕ, ллă, ллĕ* аффиксенчен кирлине кĕртсе çырăр.

Пирĕн социализм... çĕршывра хĕрÿ ĕç пырать. Пирĕн савăнăç... телей... пурăнăçа пĕтересшĕн тăрăшакан Гитлера хирĕç пĕтĕм çĕршыв тăчĕ. Кашни заводра, колхозра ăнлану... дисциплина çирĕпленсе пырать. Пирĕн хăват... хастар..., çĕнтерÿ... Совет Çарĕ фашистла çынçиенсене çапса çĕмĕрчĕ.

*105-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва çырса илĕр. Точкăсем вырăнне *лă, лĕ, ллă, ллĕ* аффикссенчен пĕрне, кирлине, кĕртсе çырăр.

Ем-ешĕл çеç вăрман,
чечек... улăх.
Шăпчăк юрри янăрать
кунта хăюллăн.
Ман çамрăклăх çав улăх пек
чечек...,
ман çамрăклăх çав юрă пек
хăю...

## 18 §. Сăпатлă местоимениcем.

*106-мĕш хăнăхтару.* Сулахай енчипе сылтăм енчи предложенисене танлаштарса пăхăр. Вĕсен хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур? Сылтăм енче *Верук, Верука, ачасем* вырăнне мĕнле сăмахсем тăрaççĕ?

| | |
|---|---|
| 1. Пӗчӗк **Верук** урампа пынӑ. | Пӗчӗк Верук урампа пынӑ. |
| 2. Сасартӑк Верука йытӑ хӑвалама пуҫланӑ. | Сасартӑк **ӑна** йытӑ хӑвалама пуҫланӑ. |
| 3. **Верук** йытӑран тарма тытӑннӑ. | **Вӑл** йытӑран тарма тытӑннӑ. |
| 4. **Верук** йытӑран тарнине ачасем курнӑ. | **Вӑл** йытӑран тарнине ачасем курнӑ. |
| **Ачасем** йытта хӑваласа янӑ. | **Вӗсем** йытта хӑваласа янӑ. |

Предложенире япала ячӗсем вырӑнне ***эпӗ, эсӗ, вӑл, эпир, эсир, вӗсем*** йышши сӑмахсем (ят вырӑнне калакан сӑмахсем) пулма пултараҫҫӗ. Вӗсене **местоименисем** теҫҫӗ.

*Эпӗ, эпир*—1-мӗш сӑпат местоименийӗсем.
*Эсӗ, эсир*—2-мӗш сӑпат местоименийӗсем.
*Вӑл, вӗсем*—3-мӗш сӑпат местоименийӗсем.
1-мӗш сӑпат—кам калаҫаканни.
2-мӗш сӑпат—кама калатпӑр, ҫавӑ.
3-мӗш сӑпат—кам е мӗн ҫинчен калатпӑр, ҫавӑ.

***107-мӗш хӑнӑхтару***. Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Местоименисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Эпӗ Павӑлтан аслӑрах. 2. Эпӗ вунӑ ҫулта, вӑл саккӑрта анчах.
2. Атте вӑрмантан таврӑнчӗ. Вӑл мана: „Эсӗ лашана колхоза илсе кайса пар-ха",—терӗ.
3. Эпир виҫҫӗн, эсир иккӗн: пурӗ пӗрле пиллӗкӗн.
4. Павӑл килте ҫук, вӑл кинона кайнӑ.

## Сӑпатлӑ местоименисем вӗҫленни.

Пӗрреллӗ хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. **Кам** пионер? | *эпӗ* | *эсӗ* | *вӑл* |
| К. **Камӑн** галстук пур? | *ман(ӑн)* | *сан(ӑн)* | *ун-(ӑн)* |
| П. **Кама** значок кирлӗ? | *ман-а* | *сан-а* | *ӑн-а* |
| Т. Вожатӑй **кама** чӗнчӗ? | *ман-а* | *сан-а* | *ӑн-а* |
| Пӗр. Кампа лагере каятпӑр? | *ман-па* | *сан-па* | *ун-па* |
| В. Ялав **камра**? | *ман-ра* | *сан-ра* | *ун-ра* |
| Тух. Камран кӗнеке илнӗ? | *ман-ран* | *сан-ран* | *ун-ран* |

### Нумайлӑ хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. *эпир* | *эсир* | *вӗсем* |
| К. *пи-рӗн* | *сир-ӗн* | *вӗ-сен-(ӗн)* |
| П. *пи-ре* | *сир-е* | *вӗ-сен-е* |
| Т. *пи-ре* | *сир-е* | *вӗ-сен-е* |

| | | |
|---|---|---|
| Пӗр. *пирӗн-пе* | *сирӗн-пе* | *вӗ-сем-пе* |
| В. *пирӗн-те* | *сирӗн-те* | *вӗ-сен-че* |
| Тух. *пирӗн-тен* | *сирӗн-тен* | *вӗ-сен-чен* |

Сӑпатлӑ местоименисем падежсем тӑрӑх улшӑннӑ чухне япала ячӗсем йышӑнакан аффиксенех йышӑнаҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш сӑпатӑн пӗррелле хисепри парупа тӑву падежӗсенче уна вырӑнне ӑна ҫыраҫҫӗ.

***108-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑвва ҫырса илӗр. Сӑпатлӑ местоименисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр. Сӑпатлӑ местоименисен вӗҫленӗвӗн тӗслӗхӗсене пӑхса, сӑвӑри местоименисем кашни мӗнле падежра тӑнине кӑтартса парӑр.

## Партизанка.

— Эсӗ-и ҫав тӗртсе ҫунтартӑн
Пирӗн витене ӗнер?
—Эпӗ!—тет хӗр лӑпкӑн хирӗҫ.
Нимӗҫсем пӗрне-пӗри
Тӗлӗнсе кӑшт пӑхса илчӗҫ...
— Пултаратӑн!—тет штабри,—
... А миҫемӗш ҫын, эсӗ,
Партизан отрядӗнчен?
Ыттисем ӑҫта ӗҫлеҫҫӗ,
Тӗп йӑви ӑҫта вӗсен?
— Каламастӑп!..—терӗ, хыттӑн
Касса татрӗ ҫамрӑк хӗр.

Хусанкай („Таня“ поэмӑран.)

***109-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисенче местоименисем мӗнле хисеприне, мӗнле сӑпатрине каласа парӑр.

1. Манӑн пичче тракторист. Вӑл питӗ тӗплӗ ӗҫлет. Унпа ӗҫлекенсем ӑна питӗ мухтаҫҫӗ. Вӗсем унран ударлӑ ӗҫлеме вӗренеҫҫӗ.

2. Манӑн аппа колхозра ӗнесем пӑхать. Вӑл ударница. Унӑн ятне хӗрлӗ хӑма ҫине ҫырнӑ.

***110-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисенчи местоимени-сен хисепне, сӑпатне, падежне кӑтартса парӑр.

1. **Пирӗн** килте радио пур, **сирӗн** пур-и?

2. **Эсӗ ман** пата пыр-ха, **санпа** пӗрле урока хатӗрленме ҫӑмӑл.

3. **Эпӗ сире** вулама кӗнеке панӑччӗ, **эсир ӑна** илсе килтӗр-и?

4. **Эсир** хӑяр вӑррисене шӑтарса пӑхман, **вӗсене** акиччен шӑтарса пӑхас пулать.

***111-мӗш хӑнӑхтару.*** а) ***Эпӗ, эсӗ, вӑл*** местоименисене кӗртсе, предложенисем тӑвӑр. б) ***Эпир, эсир, вӗсем*** местоименисене кӗртсе, предложенисем тӑвӑр.

***112-мӗш хӑнӑхтару.*** Точкӑсем вырӑнне ***вӑл*** местоимение кирлӗ падежра лартса ҫырӑр.

## Ясли.

Анна аппа заводра ӗҫлет. Завода... 8 сехетре каять. ... пӗчӗк хӗрача пур. Кашни ир, ӗҫе кайнӑ чухне Анна аппа хӑйпе пӗрле хӗрне илет те... яслине кӗртсе хӑварать. Яслире... пӑхаҫҫӗ, апат ҫитереҫҫӗ. Ӗҫрен тухсан, Анна аппа яслине кӗрсе, хӗрне илсе тухать те... пӗрле килне таврӑнать.

***113-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисенчи местоимени-сене пӗрремӗш сӑпатран иккӗмӗш сӑпата куҫарса, предложенисем тӑвӑр.

Тӗслӗх: *Эсӗ вунпӗр ҫулта. Санӑн аҫу, аннӳ, пиччӳ, инкӳ пур.*

Эпӗ вунпӗр ҫулта. Манӑн атте, анне, пичче, инке пур. Эпӗ ҫичӗ ҫул тултарсан, мана шкула ячӗҫ. Мана ӑсатма шкула анне пычӗ. Манпа пӗрле вӑл шкул заведующийӗ патне кӗчӗ. Мана шкула илчӗҫ. Ҫав ҫулта манпа пӗрле 39 ача вӗренме кӗчӗ. Эпӗ ун чухне вулама, ҫырма пӗлместӗм. Халь ӗнтӗ эпӗ вулама та, ҫырма

та, шутлама та пĕлетĕп. Историпе географие те пĕлетĕп. Эпĕ лайăх вĕренетĕп. Мана шкулта отличник теççĕ.

## 19 §. Глаголсем.

*114-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсене çырса илĕр.

### Çурхи юрă.

Кайăксем çунат çапса юрлаççĕ,
сывлăмпала сассисене уçаççĕ.
Ту хыçĕнчен çурхи хĕвел тухать.
Çĕршывăмăр хастарлăхпа тулать.

Улмуççисем кĕрнеклĕн хумханаççĕ.
Чечекĕсем çеçкисене сараççĕ.
Çĕре сырса илет им-пыл шăрши,
хаваслăн та тулли сывлать çĕршыв.

Тӳпе урлă самолётсем каçаççĕ,
çӳл тӳпене шăп çурмаран касаççĕ,
Вĕсен çинче ылттăн хĕвел кулать,
Çĕршывăмăр хастарлăхпа тулать.

Çак сăвăри паллă тунă сăмахсем япала мĕн тунине пĕлтереççĕ?

> Япала мĕн тунине е выртнине-тăнине пĕлтерекен сăмаха **глагол** теççĕ.
>
> **Юрлаççĕ, хумханаççĕ, сывлать, кулать** сăмахсем—**глаголсем.**

*115-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва çырса илĕр. Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Мотор пекех тапать чĕрем,
хаваслантать çак ирĕкшĕн.
Пирĕншĕн ешерет çерем.
Çут шыв та юхать пирĕншĕн.

Йĕри-тавра пăхатăп эп—
чечекленет çĕршывăмăр.
Хавас юрра юрлатăп эп.
Сывă пултăр çулпуçăмăр!

*116-мĕш хăнăхтару.* Калава вуласа тухăр. Ăна çырса илĕр. Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

### Çил-тăман.

Мана службăна янă вырăналла çитсе пыратпăр. Таврара пушхирсем сарăлса выртаççĕ. Пĕтĕм тавра шурă юрпа витĕннĕ. Хресченсен çуни йĕрĕ тăрăх кўме кăштăртатса шăвать.

Таçта аякра пĕр шурă пĕлĕт татăкĕ курăнать. Малтан эпĕ ăна пĕр-пĕр пĕччен сăрт е тĕмеске пулĕ терĕм. Ямшăк мана ку пĕлĕт çил-тăман тухасса палăртни çинчен пĕлтерчĕ.

Ямшăк чуптарма пуçларĕ. Учĕсем маттуррăн юртаççĕ. Çил вăйланчĕ. Вĕтĕ юр вĕтĕртетме тытăнчĕ. Унтан сасартăк çерçи пуçĕ пек чăмаккасем лаплатма пуçларĕç. Çилĕ улать. Тăман çавăрттарса тухрĕ. Нимĕн те курăнмасть.

## 20 §. Глаголсем сăпатланни.

*117-мĕш хăнăхтару.* Статьяна çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем хушăр.

### Красноармеец, тракторист тата тимĕрçĕ.

(Кам мĕнле калать).

Красноармеец тракториста калать: „Эпĕ ССР Союзне..., эсĕ тракторпа..., вăл (тимĕрçĕ) тимĕр...“— тет.

Тимĕрçĕ красноармееца калать: „Эпĕ тимĕр..., эсĕ Совет Союзне..., вăл (тракторист) тракторпа...,“— тет.

Тракторист тимĕрçе калать: „Эпĕ тракторпа..., эсĕ тимĕр..., вăл (красноармеец) Совет Союзне...,“— тет.

Кирлĕ сăмахсем:

| | | |
|---|---|---|
| *сыхлатăп* | *шаккатăп* | *ĕçлетĕп* |
| *сыхлатăн* | *шаккатăн* | *ĕçлетĕн* |
| *сыхлать* | *шаккать* | *ĕçлет* |

***118-мěш хăнăхтару.*** 117-мěш хăнăхтарăва тепěр хут çырса илěр: ***эпě, эсě, вăл*** местоименисене нумайлă хисепре лартса, точкăсем вырăнне çак глаголсене кěртсе пырăр.

| | | |
|---|---|---|
| *сыхлатпăр* | *шаккатпăр* | *ěçлетпěр* |
| *сыхлатăр* | *шаккатăр* | *ěçлетěр* |
| *сыхлаççě* | *шаккаççě* | *ěçлеççě* |

Глагол пěрремěш, иккěмěш тата виççěмěш сăпатри местоименипе пěрле тăрать пулсан, унăн вěçě улшăнса пырать.

Глагол сăпат тăрăх улшăннине **сăпатланни** теççě.

## 21 §. Глаголăн вăхăчěсем.

Эпě çыру *çыратăп.*
Эпě çыру *çыртăм.*
Эпě çыру *çырăп.*

Эпě *вěренетěп.*
Эпě *вěрентěм.*
Эпě *вěренěп.*

Эпě кěнеке *вулатăп.*
Эпě кěнеке *вуларăм.*
Эпě кěнеке *вулăп.*

Эпě шкула *çÿретěп.*
Эпě шкула *çÿрерěм.*
Эпě шкула *çÿрěп.*

Глаголсем **хальхи** вăхăта, **иртнě** вăхăта, **пулас** вăхăта пěлтерме пултараççě.

Хальхи вăхăтри глагол ěç хаvolt, каlaçнă вăхăтра пулнине пěлтерет: *çыратăп, вулатăп, вěренетěп, ěçлетěп.*

Иртнě вăхăтри глагол пулса иртнě ěçе пěлтерет: *çыртăм, çырнă, вуларăм, вуланă, вěрентěм, вěреннě.*

Пулас вăхăтри глагол ěç калаçнă вăхăтран кайран пуласса пěлтерет: *çырăп, вулăп, вěренěп, çÿрěп.*

***119-мěш хăнăхтару.*** Çак глаголсене хальхи вăхăтра лартса çырăр.

Тěслěх: *Канатăп. Ěмěтленетěп.*

Кан... Выля... Пыр... Çěкле... Кěр... Йěркеле... Ěмěтлен... Шутла...

***120-мěш хăнăхтару.*** Çак глаголсене иртнě вăхăтра лартса çырăр.

Тěслěх: *Ěçлерěм* (*ěçленě*). *Вăйлантăм* (*вăйланнă*).

Ĕçле... Вĕрен... Сыхла... Юрла... Кала... Кур... Кул... Савăн... Хаваслан... Вăйлан...

*121-хăнăхтару.* Çак глаголсене пулас вăхăтра лартса çырăр.
Тĕслĕх: *Çитĕнĕп. Пуçтарăп.*

Çитĕн... Ӳс... Çыр... Хастарлан... Кӳл... Тăвар... Турттар... Çут... Çур... Пуçтар.... Виç...

*122-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенчи иртнĕ вăхăтри глаголсене хальхи вăхăта куçарăр.
Тĕслĕх: *Ванюк шкулта вĕренет.*

Ванюк шкулта вĕреннĕ. Вăл пур предметсемпе те лайăх вĕреннĕ. Ванюк уроксене йĕркеллĕ хатĕрленсе пынă. Учитель ыйтсан, вăл яланах тĕрĕс ответ панă. Ванюк хăйĕн юлташĕсене те вĕренӳре пулăшса пынă.

*123-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвăри хальхи вăхăтри глаголсене пулас вăхăта куçарса пырăр.
Тĕслĕх: *Шавлĕ, кашлĕ сĕм вăрман, вĕçĕ-хĕрри курăнмĕ.*

## Вăрманта.

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.
Кутсăр-пуçсăр çил тухсан,
чарăнассăн туйăнмасть.

Тапхăр-тапхăр çил килет,
пăлтăр-палтăр çавăрса.
Тĕттĕм вăрман ӳхĕрет,
çĕре çитех авăнса.

Хура пĕлĕт пĕрмаях
шăвать вăрман тăрринче.
Ярать çиçĕм çĕр çурсах
хура пĕлĕт хушшинче.

Аçа çапать, шартлатать,
пĕтĕм тĕнче кисренет.
Çумăр çырма пек юхать,
лупашкасенче кĕрлет.

*124-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяра тĕл пулакан глаголсен вăхăтне кăтартса парăр.

Ĕлĕк ĕççыннисем патша чиновникĕсен, буржуазин, кулаксен пусмăрĕнче пурăннă. Ĕççынни темĕн чухлĕ ĕçлесен те çителĕклĕ пурăнăçпа пурăнайман.

Халь ĕççыннисен пурăнăçĕ пĕтĕмпех урăхланчĕ. Совет влаçĕ ĕççыннисене ирĕке кăларчĕ. Хресченсем колхозсене пĕрлешрĕç. Хресченсем колхозра хăйсен телейне тупрĕç. Вĕсем халь пуян пурăнăçпа пурăнаççĕ. Фабрикăсем, заводсем государство аллинче тăраççĕ. Рабочисем кунне 7—8 сехет ĕçлеççĕ.

Пурăнăç çулсерен лайăхланса пырать. Малашне вăл тата телейлĕрех, тата çутăрах пулĕ.

*125-мĕш хăнăхтару.* Паллă тунă глаголсен вăхăчĕсене кăтартса парăр.

### Сăпка юрри.

Пĕчĕк ывăлăмçăм, çывăр,
тутлă тĕлĕк кур.
Ӳсĕн эс паттăр та сывă,
çитĕнĕн маттур.
　　Ĕмĕтсем таçтах **вĕçеççĕ**,
　　питĕ инçене.
　　**Пулăн** эс, ачам, вĕçевçĕ,
　　пулăн инженер.
**Кайăн** тинĕс-океанăн
пăрĕсем урлах.
Çавăнпа аннӳ халь санăн
савăнса **юрлать.**
　　**Çитĕн** эс сив тинĕс урлă
　　çурçĕрĕн вĕçне.
　　Сан çинчен пин юрă **юрлĕç,**
　　**ырлĕç** сан ĕçне.

## 22 §. Глаголсем хальхи вăхăтра сăпатланни.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | *Эпĕ кур-ат-ăп,* | *илт-ет-ĕп.* |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсĕ кур-ат-ăн,* | *илт-ет-ĕн.* |
| 3-мĕш сăпат. | *Вăл кур-ать,* | *илт-ет.* |

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | *Эпĕ шутла-т-ăп,* | ***ĕçле-т-ĕп.*** |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсĕ шутла-т-ăн,* | *ĕçле-т-**ĕн.*** |
| 3-мĕш сăпат. | *Вăл шут-ла-ть,* | *ĕçле-т.* |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | *Эпир кур-ат-**пăр,*** | *илт-ет-**пĕр.*** |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсир кур-ат-**ăр,*** | *илт-ет-**ĕр.*** |
| 3-мĕш сăпат. | *Вĕсем кур-аç-çĕ,* | *илт-еç-çĕ.* |
| 1-мĕш сăпат. | *Эпир шутла-т-пăр,* | *ĕçле-т-пĕр.* |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсир шутла-т-ăр,* | *ĕçле-т-ĕр.* |
| 3-мĕш сăпат. | *Вĕсем шутла-ç-çĕ* | *ĕçле-ç-çĕ.* |

### Глаголăн хальхи вăхăт аффиксĕсем.

| | Пĕрреллĕ хисеп. | Нумайлă хисеп. |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпатра: | ***атăп, етĕп,*** ***тăп, тĕп,*** | ***атпăр, етпĕр,*** ***тпăр, тпĕр,*** |
| 2-мĕш сăпатра: | ***атăн, етĕн,*** ***тăн, тĕн,*** | ***атăр, етĕр, тăр,*** ***тĕр,*** |
| 3-мĕш сăпатра: | ***ать, ет,*** ***ть, т.*** | ***аççĕ, еççĕ; ççĕ(яççĕ)*** |

***126-мĕш хăнăхтару.*** Сăвăри хальхи вăхăтри глаголсене çырса илĕр.

Вĕсен сăпатне кăтартса парăр.

### Пахча.

Шарлатса юхать çырма.
Хĕрринче ун хурама,
аякра кăтра вăрман.
Лапăра ача-пăча
ўстерет пĕчĕк пахча.
Пит хитре: йĕркен-йĕркен
чавса тухнă йăрансем.
Ав унта йĕркен-йĕркен
çитĕнеççĕ çимĕçсем.
Шав ĕçлеççĕ ачасем.
Ўркенмеççĕ çамрăксем.

***127-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене хальхи вăхăтра сăпатласа тухăр.

Эпĕ хавасланатăп. Эпĕ хĕпĕртетĕп. Эпĕ ĕмĕтленетĕп. Эпĕваскатăп.

*128-хăнăхтару.* Çакăнти паллă тунă хальхи вăхăтри глаголсене мĕнле çырмаллине асăрхăр.

Куллен **вăйланать, çитĕнет, çирĕпленет** пирĕн тăван çĕршыв. Халиччен çын пурăнман вырăнсенче **халь** çĕнĕ заводсем **лараççĕ**, çĕнĕ хуласем **лараççĕ**, электричество çути **йăлтăртатать.** Пирĕн çĕршывра темĕн чухлĕ çĕнĕ заводсемпе фабрикăсем **ĕçлеççĕ**, çĕнĕ ялсем, хуласем **чечекленеççĕ.** Çĕршывăн оборонине çирĕплетес тĕлĕшпе хĕрӳ ĕç **пырать.**

Глагол хытă сăмах пулсан, ун вĕçĕнче виççĕмĕш сăпатра пĕрреллĕ хисепре ***ать*** çырмалла, нумайлă хисепре ***аççĕ*** çырмалла: *чупать, чупаççĕ.*

Глагол çемçе сăмах пулсан, ун вĕçĕнче виççĕмĕш сăпатра пĕрреллĕ хисепре ***ет*** çырмалла: нумайлă хисепре ***еççĕ*** çырмалла: *вĕçет, вĕçеççĕ.*

*129-мĕш хăнăхтару.* Сăвва çырса илĕр. Çырса пĕтермен глаголсене çырса пĕтерсе пырăр.

Вĕçевçĕсем çурçĕрелле васка...
Сад пахчинче ĕçле... аслă пахчаçă.
Хăй пахчинчи кашни йывăçах
çитĕнтер... çак тимлĕхлĕ хуçа.

Кайăкĕсем пахча тулли юрла...
Юррипеле пахчаçа ырла...
Çак çĕр çинчи чи хаклă тăван ят
юрăсенче хĕвел пек шăран...

*130-мĕш хăнăхтару.* 129-мĕш хăнăхтару пекех тăвăр.

## Хĕрӳллĕ ĕç.

Ĕçле..., шавла... вĕр-çĕнĕ станоксем,
металл шăрат... гигант домнăсем.
Васка..., чуп... вăрăм поездсем,
тем тĕрлĕ тавар турттар... вĕсем.
Кĕрле... хурçă трактор колхоз хирĕнче,
шавла... молотилка пуян йĕтемре.
Комбайнĕ хир тăрăх хуçа пек çӳре...
Васка... ĕçчен халăх хĕрӳллĕ ĕçре.

# 23 §. Глаголсем пулас вăхăтра сăпатланни.

*131-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта паллă тунă глаголсем мĕнле вăхăта пĕлтернине, мĕнле аффикссем йышăннине каласа парăр.

Хула урамĕ тăрăх виçĕ пионер пырать. Вĕсенчен пĕри калать: „Эпĕ лётчик **пулăп**. **Ӳсĕп**, **вĕренĕп**, самолёт çинче **вĕçĕп**",—тет.

Иккĕмĕшĕ калать: „Эпĕ инженер **пулăп**. Çĕнĕ хула **тăвăп**, çутă вокзал **тăвăп**, шыв урлă кĕперсем **хывăп**",—тет.

Виççĕмĕшĕ калать: „Эпĕ художник **пулăп**. Çав çутă вокзала картина çине **ӳкерĕп**. Клуба картинăсем туса **çакăп**",—тет. Виççĕшĕ те вĕсем тăван çĕршывшăн усăллă çынсем пулма ĕмĕтленеççĕ.

*Пулăп, вĕçĕп, вĕренĕп, ӳсĕп*—пулас вăхăтри глаголсем. Глаголсем пулас вăхăтра çапла сăпатланаççĕ.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | *Эпĕ çыр-ăп,* | *вул-ăп,* | *ӳс-ĕп.* |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсĕ çыр-ăн,* | *вул-ăн,* | *ӳс-ĕн.* |
| 3-мĕш сăпат. | *Вăл çы-рĕ,* | *вул-ĕ,* | *ӳс-ĕ.* |

Нумайлă хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | *Эпир çыр-ăпăр* | *вул-ăпăр* | *ӳс-ĕпĕр.* |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсир çыр-ăр* | *вул-ăр* | *ӳс-ĕр.* |
| 3-мĕш сăпат. | *Вĕсем çыр-ĕç* | *вул-ĕç* | *ӳс-ĕç.* |

**Пулас вăхăт аффиксĕсем.**

| Пĕрреллĕ хисеп. | Нумайлă хисеп. |
|---|---|
| 1-мĕш сăпатра: *ăп, ĕп* | ***ăпăр, ĕпĕр*** |
| 2-мĕш сăпатра: *ăн, ĕн* | ***ăр, ĕр*** |
| 3-мĕш сăпатра: *ĕ* | ***ĕç*** |

***132-мĕш хăнăхтару.*** Тĕслĕхе пăхса, çак глаголсене пулас вăхăтра сăпатласа тухăр.

Эпĕ юрлăп. Эпĕ ĕçлĕп. Эпĕ çитĕнĕп. **Эпĕ** çĕршыва сыхлăп.

***133-мĕш хăнăхтару.*** Паллă тунă глаголсен вăхăтне, хисепне, сăпатне кăтартса парăр.

Ыран пирӗн шкулта вечер пулать. Эпӗ вечерта сăвăсем **вулăп**, эсӗ юрăсем **юрлăн**, Коля кулăшла калавсем каласа **парӗ**. Пурте эпир хамăр ҫитӗнӳсене **кăтартăпăр**. Хамăр та **савăнăпăр**, ҫынсем те **савăнӗҫ**.

***134-мӗш хăнăхтару.*** Ҫак предложенисенчи глаголсене пулас вăхăтра пӗррелле хисепре те, нумайлă хисепре те сăпатласа тухăр.

Эпӗ поездсене ертсе ҫӳрӗп. Эпӗ учитель пулăп. Эпӗ дирижабльпе вӗҫӗп. Эпӗ командир пулма вӗренӗп.

## 24 §. Иртнӗ вăхăт.

***135-мӗш хăнăхтару.*** Ҫакăнта паллă туна глаголсем мӗнле вăхăта пӗлтереҫҫӗ?

Октябрьти социализмла аслă революци 1917-мӗш ҫулта **пулчӗ**.

Партин вунсаккăрмӗш съезчӗ 1939-мӗш ҫулхи мартăн вуннăмӗшӗнче **пуҫланчӗ**. Съезд партин ҫӗнӗ уставне **йышăнчӗ**, партин Тӗп Комитетне **суйларӗ**.

Октябрьти социализмла аслă революци 1917-мӗш ҫулта **пулнă**.

Партин вунсаккăрмӗш съезчӗ 1939-мӗш ҫулта мартăн вуннăмӗшӗнче **пуҫланнă**. Съезд партин ҫӗнӗ уставне **йышăннă**, партин Тӗп Комитетне **суйланă**.

Чăваш чӗлхинче глаголсен **курса иртнӗ вăхăт** тата **курмасăр иртнӗ вăхăт пулать.**

1. Калаканни пулса иртнӗ ӗҫе хăй курнă пек калать пулсан, глаголсем курса иртнӗ вăхăтра пулаҫҫӗ: *пуҫланчӗ, пулчӗ, суйларӗ.*

2. Калаканни пулса иртнӗ ӗҫе хăй курман пек калать пулсан, глаголсем курмасăр иртнӗ вăхăтра пулаҫҫӗ: *пуҫланнă, пулнă, суйланă.*

***136-мӗш хăнăхтару.*** Ҫак тӗслӗхсенче скобкăра лартнă икӗ сăмахран хăшне каламалла?

а) Эпӗ кăҫал ҫулла пионерсен лагерӗнче (*пулнă, пултăм*). Унта пире питӗ аван (*пăхрӗҫ, пăхнă*). Кунне тăватă хутчен апат (*ҫитеретчӗҫ, ҫитернӗ*). Вăйăсем выляма, юрăсем юрлама (*вӗрентнӗ, вӗрентрӗҫ*).

б) Майăн пӗрремӗшне уявласси 1889-мӗш ҫултан пуҫланса (*кайрӗ, кайнă*). Гарри Айзман Америкăра

шкулта (*вĕренчĕ, вĕреннĕ*). Кунта вăл пионер отрячĕ (*тунă, турĕ*). Çав отряда шкулта вĕренекен рабочи ачисем пурте (*кĕчĕç, кĕнĕ*). Гарри пур ачасене те рабочисен ĕçĕшĕн кĕрешĕве тухма (*чĕнчĕ, чĕннĕ*).

## Курса иртнĕ вăхăтри глагол сăпатланни.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | |
|---|---|
| 1-мĕш сăпат. Эпĕ *вула-**рăм*** | *ĕçле-рĕм* |
| 2-мĕш сăпат. Эсĕ *вула-**рăн*** | *ĕçле-рĕн* |
| 3-мĕш сăпат. Вăл *вула-**рĕ*** | *ĕçле-рĕ* |
| 1-мĕш сăпат. Эпĕ *çыр-**тăм*** | *пĕл-тĕм* |
| 2-мĕш сăпат. Эсĕ *çыр-**тăн*** | *пĕл-тĕн* |
| 3-мĕш сăпат. Вăл *çыр-**чĕ*** | *пĕл-чĕ* |

Нумайлă хисеп.

| | |
|---|---|
| 1-мĕш сăпат. Эпир *вула-рăмăр* | *ĕçле-рĕмĕр* |
| 2-мĕш сăпат. Эсир *вула-рăр* | *ĕçле-рĕр* |
| 3-мĕш сăпат. Вĕсем *вула-рĕç* | *ĕçле-рĕç* |
| 1-мĕш сăпат. Эпир *çыр-тăмăр* | *пĕл-тĕмĕр* |
| 2-мĕш сăпат. Эсир *çыр-тăр* | *пĕл-тĕр* |
| 3-мĕш сăпат. Вĕсем *çыр-чĕç* | *пĕл-чĕç* |

### Курса иртнĕ вăхăт аффиксĕсем.

| Пĕрреллĕ хисеп. | Нумайлă хисеп. |
|---|---|
| 1-мĕш сăпатра: *рăм, рĕм; тăм, тĕм;* | *рăмăр, рĕмĕр, тăмăр, тĕмĕр,* |
| 2-мĕш сăпатра: *рăн, рĕн; тăн, тĕн;* | *рăр, рĕр, тăр, тĕр,* |
| 3-мĕш сăпатра: *рĕ, чĕ;* | *рĕç, чĕç.* |

Глагол *р, л, н* сасăпа пĕтет пулсан, аффиксĕнче курса иртнĕ вăхăтра ***р*** вырăнне ***т*** пулать: *çыр-тăм, ĕнер-тĕм, пул-тăм, кил-тĕм, кан-тăм, чĕн-тĕм.*

Виççĕмĕш сăпат аффиксĕсенче ***т*** сасă ***ч*** сасса куçать: *çыр-чĕ, çыр-чĕç; ил-чĕ, ил-чĕç.*

*137-мěш хăнăхтару.* Иш, ярăн, кур, вěрен глаголсене курса иртнě вăхăтра сăпатласа тухăр. Сăпатланине тěслěх çине пăхса тěреслěр.

*138-мěш хăнăхтару.* Çак сăвăри паллă тунă глаголсем мěнле вăхăтрине, хăш сăпатрине, мěнле хисеприне каласа парăр.

Пахчана ирех эп **тухрăм**
уççăн-уççăн сывлама.
Эп тумлам-тумламăн **пухрăм**,
шăрçаларăм сывлăма.
Шурăмпуçěпе **çěклентěм**,
хěвел **тухрě** васкаса.
Шăпчăк сассине **итлерěм**,
хам та ятăм юрласа.

*139-мěш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă глаголсене çырса илěр. Вěсем мěнле вăхăтрине, хăш сăпатрине, мěнле хисепре тăнине каласа тухăр.

Т ě с л ě х: *ларчě*—глагол, курса иртнě вăхăтра, виççěмěш сăпатра, пěрреллě хисепре тăрать.

Хěвел анса **ларчě**. Каç **пулчě**. Акă аякра купăс сасси **илтěнчě**. Уйăх **тухрě**.

Пÿртри хăй çутисем **сÿнчěç**. Вăйăри çамрăксем тěрлě юрăсем **юрларěç** те **саланчěç**.

## Курмасăр иртнě вăхăтри глаголсем улшăнманни.

*140-мěш хăнăхтару.* Курмасăр иртнě вăхăт мěнле аффикс йышăннине асăрхăр.

| | |
|---|---|
| Эпě *çыр-нă, пěл-нě.* | Эпир *çыр-нă, пěл-нě.* |
| Эсě *çыр-нă, пěл-нě.* | Эсир *çыр-нă, пěл-нě,* |
| Вăл *çыр-нă, пěл-нě.* | Вěсем *çыр-нă, пěл-нě.* |

Курмасăр иртнě вăхăтри глагол тěпě çумне ***нă, нě*** аффикс хушăннипе пулать. Курмасăр иртнě вăхăтри глагол сăпат тăрăх та, хисеп тăрăх та улшăнмасть.

*141-мěш хăнăхтару.* Çак сăвăри паллă тунă глаголсем хăш вăхăтра тăнине каласа парăр.

## Пирĕн Конституци.

Ăна кĕтнĕ çĕршыв, кĕтнĕ çутă тĕнче,
ĕмĕт çуннă пирте шĕл-кăваррăн.
Баррикадăсенче*, чул купи хӳттинче
ăна чĕннĕ Париж коммунарĕ.
Ĕмĕтленнĕ ăна инçетри ĕмĕрсем,
ăна кĕтнĕ, шыранă этемлĕх.
Капитал никĕсне тĕпĕнчен кисретсе,
ун çулне уçса пană Маркс, Энгельс.
Тракторсем уй-хирте кăпкалатнă çĕре,—
уй-хирсем çăра пурлăхпа тулччăр!
Ӳссе çитĕнчĕ вăл çак хĕрӳллĕ ĕçре
пирĕн ĕмĕт—пирĕн Конституци.

***142-мĕш хăнăхтару.*** Сылтăм енчи глаголсем сăпатланнине сулахай енчи глаголсем сăпатланнипе танлаштарса пăхăр. Вĕсен уйрăмлăхĕсене асăрхăр.

### Пĕрреллĕ хисеп.

| | |
|---|---|
| 1-мĕш с. *çыр-тăм*, *ӳкер-тĕм*, | *пы-тăм*, *кĕ-тĕм*. |
| 2-мĕш с. *çыр-тăн*, *ӳкер-тĕн*, | *пы-тăн*, *кĕ-тĕн*. |
| 3-мĕш с. *çыр-чĕ*, *ӳкер-чĕ*. | *пы-чĕ*, *кĕ-чĕ*. |

### Нумайлă хисеп.

| | |
|---|---|
| 1-мĕш с. *çыр-тăмăр*, *ӳкер-тĕмĕр*, | *пы-тăмăр*, *кĕ-тĕмĕр*. |
| 2-мĕш с. *çыр-тăр*, *ӳкер-тĕр*, | *пы-тăр*, *кĕ-тĕр*. |
| 3-мĕш с. *çыр-чĕç*, *ӳкер-чĕç*, | *пы-чĕç*, *кĕ-чĕç*. |

### Курмасăр иртнĕ вăхăтри глаголсем.

| | |
|---|---|
| Эпĕ *çыр-нă*, *ӳкер-нĕ*. | Эсĕ *пы-нă*, *кĕ-нĕ*. |
| Эпир *çыр-нă*, *ӳкер-нĕ*. | Эсир *пы-нă*, *кĕ-нĕ*. |

Тĕпĕ *р* сасăпа пĕтекен хăшпĕр глаголсем иртнĕ вăхăтра (икĕ формăра та) çав *р* сасса çухатаççĕ: *пыр—пытăм, пынă; тăр—тăтăм, тăнă; кĕр—кĕтĕм, кĕнĕ; пер—петĕм, пенĕ; кӳр—кӳтĕм.*

Кун пек глаголсем нумаях мар.

***143-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене курса иртнĕ вăхăтра тата курмасăр иртнĕ вăхăтра туса улăштарăр. Хăш глаголсен тĕпĕнчи *р* тухса ӳкет?

---

*. Баррикада—хула урамĕсенче тăшман пырса кĕресрен тата ăна хирĕç çапăçма хăвăрт, тĕрлĕ япала купаласа тăвакан хӳтлĕх.

Хур, пар, çур, вĕр.

*144-мĕш хăнăхтару.* Çулталăк вăхăтне кура, скобкăри глаголсенчен пĕрне суйласа илсе, çырса илĕр.

Çуркунне (çитрĕ, çитет, çитнĕ, çитĕ);
Кунсем (вăрăмланĕç, вăрăмланчĕç, вăрăмланаççĕ, вăрăмланнă).
Юр кайса (пĕтрĕ, пĕтет, пĕтĕ, пĕтнĕ).
Симĕс курăк (тухать, тухрĕ, тухĕ, тухнă).
Çураки (пуçланчĕ, пуçланĕ, пуçланнă, пуçланать, пĕтрĕ, пĕтнĕ, пĕтет, пĕтĕ).

## 25 §. Глаголсен тĕпĕ.

*145-мĕш хăнăхтару.* Глаголсен кашни ушкăнне пăхса тухăр. Кашни ушкăнри глаголсен пĕр пек пайĕсене асăрхăр.

**Вула-тăп, вула-тăн, вула-ть, вула-тпăр, вула-тăр, вула-ççĕ, вула-нă, вула-рăм.**

**ĕçле-тĕп, ĕçле-тĕн, ĕçле-т, ĕçле-тпĕр, ĕçле-тĕр, ĕçлеççĕ, ĕçле-нĕ, ĕçле-рĕм.**

Глаголсен кашни ушкăнĕн улшăнман пĕр пек пайсем пур. Вăл пайсем глаголăн тĕп пĕлтерĕшĕ пулаççĕ. Глаголăн тĕп пĕлтерĕшне пĕлтерекен улшăнман пайне глагол **тĕпĕ** теççĕ (*вула, ĕçле, кур, кил, чуп, çӳре, вĕрен.*

Глаголăн улшăнакан пайне глагол **аффиксĕ** теççĕ.

*146-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Глаголсен тĕпне аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Кашни çулах майăн 1-мĕш кунĕнче тĕнчери ĕçхалăхĕ урама тухать, митингсем, демонстрацисем туса ирттерет. Пирĕн çĕршывра пур çĕрте те хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ, хаваслă юрăсем янăраççĕ. Ĕçхалăхĕ савăнать, хаваслă пурăнăç панăшăн коммунистсен партине, унăн аслă çулпуçне Сталина тав тăвать.

*147-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвăри пĕр тĕпрен кăна тăракан глаголсене (аффикссăр глаголсене) çырса илĕр.

Çĕршыв, янăра çурхи май юррипе!
Вĕç, вĕç, май юрри, Советсен çĕрĕпе!
Çĕн пурнăç хĕвел пек çиçсе улăхать,
çĕршыв манăн тулăххăн сарăлса выртать.

Ешер, ман хӗвеллӗ ҫӗршывӑм, ялан!
Юрла, шӑпчӑк, уҫҫӑн ҫӗршыв садӗнче!
Кам халь чӗрипе, чунӗпе те пуян,—
шӑпчӑк пек юрла эс ҫамрӑклӑх ҫинчен.

## 26 §. Пулманнине е пулас ҫуккине пӗлтерекен глаголсем.

***148-мӗш хӑнӑхтару.*** Сулахай енчи глаголсемпе сылтӑм енчи глаголсен пӗлтерӗшӗн уйрӑмлӑхне асӑрхӑр.

| | |
|---|---|
| Эпӗ ҫыру *ҫыратӑп.* | Эпӗ ҫыру *ҫырмастӑп.* |
| Ёнер ҫумӑр *ҫурӗ.* | Паян ҫумӑр *ҫумарӗ.* |
| Хурсем шывра *ишеҫҫӗ.* | Чӑхсем шывра *ишмеҫҫӗ.* |
| Кайӑксем ҫӳле *вӗҫеҫҫӗ.* | Кӑпшанкӑсем ҫӳлех *вӗҫмеҫҫӗ.* |
| Часах ҫулла *пулӗ.* | Текех сивӗ *пулмӗ.* |

Сулахай енчи глаголсем ӗҫ пулнине е пулассине пӗлтереҫҫӗ, сылтӑм енчи глаголсем ӗҫ пулманнине е пулас ҫуккине пӗлтереҫҫӗ.

***149-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫакӑнти глаголсене ӗҫ пулманнипе пулас ҫуккине пӗлтерекен туса улӑштарӑр.

Ҫанталӑк ӑшӑтрӗ. Ҫумӑр ҫӑвать. Хӗвел пӑхать. Шыв юхать. Ҫиҫӗм ҫиҫет. Аслати авӑтать. Ҫил вӗрет. Юр ҫӑвать. Тӑм ӳкет. Шыв шӑнать.

### Пулманнине тата пулас ҫуккине пӗлтерекен глаголсем сӑпатланни.

Пӗрреллӗ хисеп.

| | Хальхи вӑхӑт. | Иртнӗ вӑхӑт. | Пулас вӑхӑт. |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *Эпӗ кай-мас-т-ӑп,* | *кай-ма-р-ӑм,* | *кай-м-ӑп.* |
| | *Эпӗ кил-мес-т-ӗп,* | *кил-ме-р-ӗм,* | *кил-м-ӗп.* |
| 2 с. | *Эсӗ кай-мас-т-ӑн,* | *кай-ма-р-ӑ-н,* | *кай-м-ӑн.* |
| | *Эсӗ кил-мес-т-ӗн,* | *кил-ме-р-ӗн,* | *кил-м-ӗн.* |
| 3 с. | *Вӑл кай-мас-ть,* | *кай-ма-р-ӗ,* | *кай-м-ӗ.* |
| | *Вӑл кил-мес-т,* | *кил-ме-р-ӗ,* | *кил-м-ӗ.* |

Нумайлӑ хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *Эпир кай-мас-т-пӑр,* | *кай-ма-р-ӑмӑр,* | *кай-м-ӑпӑр.* |
| | *Эпир кил-мес-т-пӗр,* | *кил-ме-р-ӗмӗр,* | *кил-м-ӗпӗр.* |

2 с. *Эсир кай-мас-т-ăр, кай-ма-р-ăр, кай-м-ăр.*
*Эсир кил-мес-т-ĕр, кил-ме-р-ĕр, кил-м-ĕр.*
3 с. *Вĕсем кай-маç-çĕ. кай-ма-рĕç, кай-м-ĕç.*
*Вĕсем кил-меç-çĕ, кил-ме-рĕç, кил-м-ĕç.*

Ĕç пулманнине пĕлтерме хальхи вăхăтра глагол тĕпĕ çумне ***мас, мес*** аффикс хушăнать, иртнĕ вăхăтра ***ма, ме*** аффикс хушăнать, ĕç пулас çуккине пĕлтерме пулас вăхăтра ***м*** аффикс хушăнать.

***150-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Пулманнине пĕлтерекен глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Вăл глаголсен вăхăтне, сăпатне, хисепне каласа парăр.

Ют çĕршывсенчи революциллĕ рабочисем пирĕн тăван çĕршыври пурăнăç епле юсанса пынине асăрхаса тăраççĕ. Пирĕн Совет Союзне тĕнчери мĕнпур рабочи хăйĕн тăван çĕршывĕ тесе хисеплет.

Капитализмлă государство рабочишĕн тăван çĕршыв пулма пултараймасть. Капитализмлă государствăра рабочи телейлĕ пурăнăç кураймасть. Унта нумай рабочисем хăйсене тăранмалăх ĕç те тупаймаççĕ.

Совет Союзĕ тĕнчери мĕнпур пролетарисен тăван çĕршывĕ пулса тăрать. „Пире ют çĕр пĕр пусăм та кирлĕ мар. Анчах хамăр çĕре те, хамăр çĕре пĕр вершук та никама та памастпăр". (*Сталин*).

***151-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Пулнине пĕлтерекен глаголсене пĕр йĕрпе, пулманнине пĕлтерекен глаголсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

Пире капиталистсем кураймаççĕ. Вĕсем пирĕн çĕршывра власть рабочисемпе хресченсен аллинче тăнине юратмаççĕ. Ирсĕр Гитлер пирĕн çине сăлтавсăрах килсе тапăнчĕ. Анчах пирĕн совет ĕç халăхĕ, пирĕн Совет Çарĕ ăна хирĕç çĕкленчĕ. Нимĕç фашисчĕсен ĕç тухмарĕ. Пирĕн паттăр Совет Çарĕ, пирĕнпе туслă çĕршывсен çарĕсемпе пĕрле, нимĕç фашисчĕсене çапса çĕмĕрчĕ.

***152-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене хире-хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем тупăр.

| | |
|---|---|
| *Вулать—вуламасть* | *Пăхмасть—пăхать* |
| Вылять—... | Утмасть—... |
| Шавлать—... | Шутламасть—... |

| | |
|---|---|
| Ывăнать—... | Пытанмасть—... |
| Пырать—... | Вĕрмест—... |
| Килет—... | Ешермест—... |
| Вĕçет—... | Пиçмест—... |

Ĕç пулманнине пĕлтерекен глаголсен вĕçĕнче, виççĕмĕш сăпатра хальхи вăхăтра, пĕррелле хисеппре хытă сăмахра ***масть*** çемçе сăмахра ***мест*** çырмалла; нумайлă хисепре хытă сăмахра ***маççĕ***, çемçе сăмахра ***меççĕ*** çырмалла.

***153-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене кĕртсе çуркунне çинчен тĕрлĕ предложенисем тăвăр.

Хĕртет. Пĕçертет. Вĕрмест. Курăнмасть. Кăтиклет. Юрлать. Хĕпĕртеççĕ. Выляççĕ.

Предложенисем тума пулăшакан япала ячĕсем: *юр, хĕвел, çил, чăхă, тăри, ачасем.*

***154-мĕш хăнăхтару.*** а) сăвва çырса илĕр. ă) Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Çут ирĕк—хĕвел тăвăл витĕр çутатрĕ,
Тăван аслă Ленин кăтартрĕ çула.
Пире халăх тивçĕшĕн Сталин ӳстерчĕ
Çĕклерĕ ĕçе, чĕнчĕ паттăр пулма.

Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
Халăх телейĕн хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
Паттăр утар çĕнтерсе малалла!

## 27 §. Сăмахсен предложенири çыхăнăвĕ. Предложенин кĕçĕн членĕсем.

***155-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Унтан кашни предложенири сăмахсене ыйтусем тăрăх пĕрпĕринпе мăшăрăн-мăшăрăн çыхăнтарса çырăр.

**Суллахи ир.**

1. Хĕрлĕ шурăмпуç пĕлĕте витрĕ. 2. Кĕтӳç кĕтӳ патневаскать. 3. Халăх хире тухрĕ. 4. Ачасем ыйхăран вăранчĕç. 5. Хирте машинăсем хытă кĕрлеççĕ. 6. Колхозниксем хирте савăнса ĕçлеççĕ.

1. (*Мĕн?*)... витрĕ. (*Мĕнле?*) ... шурăмпуç... (*Мĕне?*)... витрĕ.

2. (*Кам?*) ...васкать. (*Ăçта?*)... васкать.

3. (*Кам?*)... тухрĕ. (*Ăçта?*)... тухрĕ.

4. (*Камсем?*) ... варанчĕç. (*Мĕнтен?*)... варанчĕç.

5. (*Мĕнсем?*)... кĕрлеççĕ. (*Ăçта?*)... кĕрлеççĕ. (*Мĕнле?*)... кĕрлеççĕ.

6. (*Камсем?*)... ĕçлеççĕ. (*Ăçта?*)... ĕçлеççĕ. (*Мĕнле?*)... ĕçлеççĕ.

Тĕслĕх: Шурăмпуç витрĕ. Хĕрлĕ шурăмпуç. Пĕлĕте витрĕ.

***156-мĕш хăнăхтару.*** 155-мĕш хăнăхтарури пекех тăвăр.

## Улăхра

1. Колхозниксем улăха тухрĕç. 2. Вĕсем унта утă çулаççĕ. 3. Аслă улăх янăраса тăрать. 4. Çулакансем юрă юрлаççĕ. 5. Улăхра çава сасси илтĕнет. 6. Пурте хĕпĕртесе, ăмăртса ĕçлеççĕ.

1. (*Камсем?*) ... тухрĕç. (*Ăçта?*) ... тухрĕç.

2. (*Камсем?*) ...çулаççĕ. (*Мĕн?*)... çулаççĕ. (*Ăçта?*) ... çулаççĕ.

3. (*Мĕн?*)... янăраса тăрать. (*Мĕнле?*) ... улăх.

4. (*Камсем?*)... юрлаççĕ. (*Мĕн?*) ... юрлаççĕ.

5. (*Мĕн?*)... илтĕнет. (*Ăçта?*)... илтĕнет.

6. (*Камсем?*)... ĕçлеççĕ. (*Мĕнле?*)... ĕçлеççĕ.

Тĕслĕх: Колхозниксем тухрĕç. Улăха тухрĕç.

> Предложенири сăмахсем пĕр-пĕринпе пĕлтерĕшĕ тăрăх мăшăрăн-мăшăрăн çыхăнса тăраççĕ. Кашни мăшăрĕ тепĕр мăшăрпа çыхăнса тăрать. Пĕр мăшăрăн пĕр сăмахĕ тепĕр мăшăрăн сăмахĕпе çыхăнса çĕнĕ мăшăр пулать. Çапла майпа çыхăнса, сăмахсен ушкăнĕ **уйрăм шухăша пĕлтерет, предложени** пулса тăрать.

***157-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенчи сăмахсене мăшăрăн-мăшăрăн çыхăнтарса çырăр.

1. Тăрă пĕлĕтре тăри юрлать. 2. Мăн Çавал авкаланса юхать. 3. Ешĕл улăх сарăлса выртать. 4. Вĕтлĕх вăрман ешерсе ларать. 5. Пĕчĕк ачасем вăйă выляççĕ.

Тĕслĕх: Тăри юрлать. Пĕлĕтре юрлать. Тăрă пĕлĕтре.

***158-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенчи сăмахсем пĕр-пĕринпе епле çыхăнса тăнине чертĕжпа тата ыйтусемпе кăтартса парăр.

Сарă хĕвел йăлтăртатса тухрĕ. Ирхи сывлăм кĕмĕл пек йăлтăртатать. Лăпкă çил вĕрет. Çутă шыв тӳлеккĕн юхать. Шывра шурă хурсем ишеççĕ. Улăхра пăрусем çӳреççĕ. Хирте сарă тулă хумханса ларать:

Тĕслĕх:




*159-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Подлежащие е сказуемăя ăнлантарса паракан сăмахсене аялтан йĕр туртса тухăр.

Эпир хамăрăн тăван çĕршыва юрататпăр. Пирĕн çĕршывра ĕçхалăхĕ телейлĕ пурăнать. Колхозсенче тырă ăнса пулать. Çулсерен çĕнĕ заводсем хутшăнаççĕ. Çĕнĕ шкулсем уçăлаççĕ. Халĕ ялсенче те электростанцисем пур.

Пирĕн çĕршыва коммунистсен партийĕ ертсе пырать. Пирĕн çĕршыва Сталин ертсе пырать. Пирĕн çĕршыва тăшмансенчен Совет Çарĕ сыхлать.

Анлă предложенире подлежащипе сказуемăйсăр пуçне урăх сăмахсем те пулаççĕ. Вĕсем хăшĕ подлежащие, хăшĕ сказуемăя ăнлантарса параççĕ. Çавăн пек ăнлантару сăмахĕсене **кĕçĕн членсем** теççĕ.

*160-мĕш хăнăхтару.* Ыйтусем вырăнне кĕçĕн членсем кĕртсе, анлă предложенисем туса çырăр.

## Пулă тытни.

Ачасем (*ăçта*?) кайрĕç. Вĕсем (*мĕн*?) илсе кайрĕç. (*Мĕнле*?) пулăсем (*ăçта*?) ишсе çӳреççĕ. Ачасем (*мĕн*?) шыраççĕ. Пулăсем (*мĕне*?) çакланаççĕ. Петĕр (*мĕн*?) туртса кăларчĕ. (*Мĕнле*?) пулă (*ăçтан*?) вĕçерĕнсе кайрĕ.

Тĕслĕх: Ачасем пулла кайрĕç.

*161-мĕш хăнăхтару.* „Пулă тытни“ статьяри предложенисенче хăш сăмах подлежащие, хăш сăмах сказуемăя ăнлантарса панине чертĕжсемпе кăтартса парăр.

Тĕслĕх:




*162-мĕш хăнăхтару.* Çак ансăр предложенисенчен, кĕçĕн членсем кĕртсе, анлă предложенисем тăвăр та каласа парăр.

Хĕл çитрĕ. Хир шуралчĕ. Çул ӳкрĕ. Ачасем савăнаççĕ. Ачасем ярăнаççĕ. Çунашкасем вĕлтлетеççĕ. Конькисем чăкăртатаççĕ. Шавлани илтĕнет. Юрă янăрать.

*163-мĕш хăнăхтару.* Чертĕжсенчи каşни предложение йĕркен-йĕркен çырса тухăр.






*164-мĕш хăнăхтару.* Тетрадьсем çине çакăн пек чертĕжсем тăвăр. Вĕсем çине аялта панă предложенисене вырăнaçтарса тухăр.




Отечественнăй вăрçă çĕнтерӳпе пĕтрĕ. Лăпкă самана çитрĕ. Çĕршыв хăватлăн ӳсет.

*165-мĕш хăнăхтару.* Çакăнти пек чертĕжсем ӳкерсе, çак предложенисене чертĕжсем ăшне вырнаçтарар.

1. Пионер хăйĕн вăхăтне хисеплет. 2. Пионер комсомола пулăшать. 3. Кашни пионер пĕлӳсем илме тăрăшать. 4. Пионер шкул пурлăхне сыхлать. 5. Пионер шкулта лайăх вĕренет.



3)



4)



5)



***166-мĕш хăнăхтару.*** Скобкăри ыйтусем тăрăх ăнлантару сăмахĕсем тупса, анлă предложенисем çырăр.

Тĕслĕх: *Кĕтӳçĕ çулла хирте кĕтӳ кĕтет.*

Ачасем (*хăçан? ăçта? мĕнле?*)... выляççĕ.
Кĕтӳçĕ (*хăçан? ăçта? мĕн?*)... кĕтет.
Пулăçă (*хăçан? ăçта? мĕн?*)... тытнă.
Колхозниксем (*ăçта? хăçан? мĕн?*)... выраççĕ.
Учитель (*камсене? мĕн-мĕн тума?*)... вĕрентет.
Йывăçсем (*ăçта? мĕнле?*)... ӳсеççĕ.
Гудок (*хăçан? мĕнле?*)... кăшкăрать.

## 28 §. Пĕрйышши членлă предложенисем.

***167-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Кашни предложенире подлежащисене тупăр. Шутласа тухăр: кашни предложенире миçе подлежащи?

Поезд тапранчĕ. Пĕчĕк ачасем, хĕрсем, ватă стариксем вагон чӳречисенчен пăхса пыраççĕ. Вагон чӳречи умĕнчен телефон юписем, çуртсем, йывăçсем вĕлтлетсе юлаççĕ. Ялсем, шывсем, вăрмансем тăра-тăра юлаççĕ.

***168-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Подлежащисене аялтан пĕр йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Вăрманта юман, хыр, чăрăш, хурăн, ăвăс ӳсет. 2. Пахчара çĕрулми, кишĕр, çарăк, хăяр, помидор ӳсет. 3. Шывра пулăсем, раксем, тĕрлĕ хуртсем пурăнаççĕ. 4. Хирте ыраш, тулă, пăрçа, урпа, сĕлĕ пулать. 5. Çуркунне хура кураксем, тăрисем, шăнкăрчсем, чĕкеçсем килеççĕ.

Предложенире темиçе подлежащи пулма пултарать. Çавăн пек предложение вуланă чухне кашни подлежащи хыççăн пĕчĕк чарăну пулать, çырура кашни подлежащи хыççăн запятой лартаççĕ.

*169-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене вуласа тухăр, унтан çырса илĕр. Кашни предложенире подлежащисене тупса кăтартăр. Подлежащисем хушшине мĕнле чарăну палли лартнине асăрхăр.

Вăрмансем, хирсем тата улăхсем симĕсленчĕç. Ĕнесем те сурăхсем хирте çӳреççĕ. Ачасем те, ваттисем те пӳртре лармаççĕ. Арçынсем, хĕрарăмсем, ачасем хирте, пахчасенче ĕçлеççĕ.

Темиçе подлежащиллĕ предложенире юлашки подлежащи умĕнче тата е та, те тăрать пулсан, ун умне запятой лартмаççĕ. Анчах та, те кашни подлежащи хыççăн тăрать пулсан, подлежащисем хушшине запятойсем лартаççĕ.

*170-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр, кирлĕ çĕре запятой лартăр.

1. Петюк Ванюк Энтри вăрмана кайрĕç. Вăрманта мăйăр тата кăмпа нумай. Унта чечексем те çырласем те пур.

2. Колхоз кĕлечĕсенче тулă ыраш сĕлĕ пăри пăрçа та пур. Хирте колхозăн тихасем пăрусем путексем çӳреççĕ. Кайăк-кĕшĕк ферминче чăхсем те кăвакалсем те хурсем те пур.

*171-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенче сказуемăйсене кăтартăр. Сказуемăйсем хушшине мĕнле паллăсем лартнă?

1. Ĕне курăк çиет те сĕт парать. Лаша суха сухалать, сӳре сӳрелет, кĕлте турттарать.

2. Шкул ачисем çыраççĕ, вулаççĕ, шутлаççĕ.

3. Машинăпах тырпула выраççĕ те çапаççĕ. Ушкăн-ушкăн хĕрĕсем ĕçлеççĕ те юрлаççĕ.

4. Колхозниксем выраççĕ тата авăн çапаççĕ.
5. Комбайн вырать те, çапать те, сăвăрать те.

Предложенире темиçе сказуемăй пулма пултарать, çавăн пек предложение вуланă чухне кашни сказуемăй хыççăн пĕчĕк чарăну пулать, çырура кашни сказуемăй хыççăн запятой лартаççĕ.

Юлашки сказуемăй умĕнче тата е та, те, е тăрать пулсан, ун умне запятой лартмаççĕ. Анчах *та, те* татăк кашни сказуемăй хыççăн тăрать пулсан, сказуемăйсем хушшине запятойсем лартаççĕ.

***172-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Сказуемăйсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Эпир ĕнер вечера кайрăмăр. Вечерта эпир юрларăмăр, ташларăмăр, вылярăмăр. Аслă классенче вĕренекенсем спектакль лартрĕç, музыка каларĕç, физкультура ваййисем турĕç.

***173-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвва çырса илĕр. Кирлĕ çĕре запятойсем лартăр.

* * *

Силленет шавлать сарлнă вăрман.
Сулăнать кашлать авалхи юман.
Ват юман кўрши—çатрака çăка
çаралчĕ ĕнтĕ, кайрĕ ыйăха.
Пĕр ват хыр анчах, хулăм тăрлăскер,
тайăлмасть сикмест тумтирне хывмасть
кĕртен хăраса ăна пуççапмасть.

***174-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенче пĕрйышши кĕçĕн членсене паллă тăвăр. Кĕçĕн членсем хушшине мĕнле паллă лартнă?

1. Улăхра шурă, сарă, хĕрлĕ чечексем ўсеççĕ. 2. Вĕçен кайăксем вăрманта та, хирте те, ялта та пурăнаççĕ. 3. Хĕлле хире, улăха, çырмасене шурă юр витет. 4. Пирĕн йытă мулкача та, тилле те тытать. 5. Эпир шултра та тутлă măйăрсем татрăмăр.

Предложенире темиçе пĕрйышши кĕçĕн член пулма пултарать. Вуланă чухне кашни пĕрйышши кĕçĕн член хыççăн пĕчĕк чарăну пулать, çырура

пĕрйышши кĕçĕн членсем хушшине запятойсем лартаççĕ.

Юлашки кĕçĕн член умĕнче тата е та, те тăрать пулсан, ун умне запятой лартмаççĕ.

Та, те кашни кĕçĕн член хыççăн тăрать пулсан, кĕçĕн членсем хушшине запятойсем лартаççĕ.

*175-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Пĕрйышши членсем хушшине кирлĕ çĕре запятойсем лартăр.

1. Эпĕ Шупашкара та Канаша та Çĕрпĕве те кайса курнă. 2. Эпĕ поездпа пăрахутпа автобуспа çÿресе курнă. 3. Пирĕн атте Варшавăра Берлинра Прагăра пулнă. Вăл нимĕçсемпе румынсемпе тата финсемпе çапăçса курнă.

*176-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Кашни предложенире пĕрйышши членсене аялтан туртăр, вĕсем мĕнле член пулнине калăр. Кирлĕ çĕре запятой лартăр.

Пирĕн хула ÿсет сарăлать. Хулара çĕнĕ илемлĕ те пысăк çуртсем нумайланчĕç. Хулара театр кино тата клубсем пур. Заводсем фабрикăсем йышлăланчĕç. Хулара вырăссем те чăвашсем те тутарсем те пурăнаççĕ.

Предложенире темиçе подлежащи е темиçе сказуемăй, е темиçе пĕрйышши кĕçĕн член пулсан, ун пек предложение **пĕрйышши членлă** предложени теççĕ.

Пĕрйышши членсем мĕне те пулин шутласа тухнине кăтартаççĕ.

*177-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенче многоточи выранне хăвăр сăмахсем тупса çырса парăр. Кирлĕ çĕре запятойсем лартăр.

Мана атте тетрадь ручка... илсе пачĕ. Анне кĕпе... çĕлесе пачĕ. Аппа мана картинăллă кĕнеке хут... пачĕ. Атте анне... мана юратаççĕ. Эпĕ аттене аннене... тĕрлĕ ĕçсенче пулăшатăп.

*178-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвăри предложенисенче пĕрйышши членсене кăтартăр, вĕсем мĕнле член пулнине каласа парăр.

Айта, Ванюк, урама,
унта сана кĕтеççĕ.

Петя, Анна, Хĕвекла
вылямашкăн чĕнеççĕ.

Çемçе юра кустарса,
юр кĕлетки тăвăпăр.
Алла-аллăн тытăнса,
выльăпăр та кулăпăр.

*179-мĕш хăнăхтару.* 178-мĕш хăнăхтарури пекех тăвăр.

Пирĕн колхоз электростанци, армансем, клуб, пысăк мунча лартнă. Колхоз хирĕнче тулă та, ыраш та, пăрçа та, сĕлĕ те лайăх пулать. Лашасем, ĕнесем, сурăхсем, сыснасем тутă çÿреççĕ.

Колхоз ачасем валли ясли тата ача сачĕ уçнă.

## 29 §. Вĕреннине аса илсе çирĕплетмелли хăнăхтарусем.

*180-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенчен анлă предложенисем туса, пĕчĕк калав çырăр.

### Утă çинче.

Çулла. Çанталăк уяр. Хĕвел пĕçертет. Курăк çитĕнсе çитнĕ. Колхозниксем çулаççĕ. Çавасем шăхăраççĕ. Утă типет. Ачасем выляççĕ.

*181-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвăри предложенисенче подлежащисене тата сказуемăйсене кăтартса парăр.

### Çуллахи ир.

Шупка шурăмпуçĕ
шуса хăпарать.
Ирхи çăлтăр вучĕ
сÿнсе çухалать.
Йăлтăр сывлăмланчĕç
чечек-курăксем.
Çерем çине анчĕç
уйри кĕтÿсем.

Çÿлелле шăваççĕ
кăвак тĕтресем.
Улăха васкаççĕ
хурсен картисем.
Хĕвел курăнайчĕ,
çĕршыв савăнать.
Ял çынĕ вăранчĕ,
ĕçе тытăнать.

*182-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Анлă предложенисенче подлежащисемпе сказуемăйсене тупăр. Подлежащисене аялтан пĕр йĕр, сказуемăйсене икĕ йĕр туртса паллă тăвăр.

Аякра, çурçĕр енче, Сольвычегодск ятлă хула ларать. Ĕлĕк патша влаçĕ кунта революционерсене ссылкăна янă. Патша тарçисем Сталин юлташа та револю-

ци ĕçне ĕçленĕшĕн çак хуланах янă. Кунта Сталин икĕ çула яхăн пурăннă. Унăн хваттерĕ хула хĕрринчи пĕчĕк пӳртре пулнă. Полицисем, час-часах унта пыра-пыра, вулама чарнă кĕнекесем, революцилле çырусем шыранă. Каçсерен Сталин юлташ пĕрмаях кĕнеке вуланă, çырнă. Вăл çак аякри вырăнтан тарма май шыранă. Пĕр каçхине, çĕр тĕттĕмминче усă курса, вăл унтан тарнă.

Сталин ссылкăра пурăннă çурта халĕ Совет влаçĕ музей тунă.

*183-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр. Кашни предложенире сказуемăйне тупăр.

## Ту çине хăпарни.

Эпир ту çине икĕ кун хăпаратпăр ĕнтĕ. Хăпарнăçемĕн ту аякки чăнкăланса пырать. Хăпарса çитесси тата çур километр юлчĕ. Анчах пирĕн çула стена пек чул пӳлчĕ. Хамăра хамăр пĕр-пĕринчен вĕренсемпе çыхрăмăр. Майĕпе çӳлелле кармашатпăр. Акă пăр çине кĕтĕмĕр. Пăр çинче утма майĕ те çук. Пуртăпа каса-каса картлашкасем тăватпăр. Сывлама йывăрланчĕ. Сывлăш çитмест. Пуç ыратать. Ăш пăтранать.

Акă эпир, юлашки вăя хурса, ту тăррине çитрĕмĕр. Пирĕн умра пĕтĕм тĕнче уçăлса кайрĕ. Таçти инçете çитех тусем тăсăлаççĕ. Юрпа витĕннĕ ту тăррисем темĕн çӳллĕш тăраççĕ.

*184-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Предложенисенчи кĕçĕн членсене аялтан туртăр.

## Сивĕ енче.

Иква ирхине юртан тунă пӳртре вăранчĕ. Вăл тиртен çĕленĕ тумтирне тăхăнчĕ. Иква шăтăкран упаленсе тула тухрĕ. Çанталăк сивĕ, тĕттĕм. Кунта хĕвел хĕлле темиçе уйăх хушши пĕрре те тухмасть. Çулла хĕвел темиçе уйăх хушши пĕрре те анмасть.

Кунта йывăç ӳсмест. Çавăнпа çынсем пӳрте юртан тăваççĕ. Çулла вĕсем тирсенчен ӳплесем тăваççĕ.

*185-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенче пĕр тĕпрен пулнă сăмахсене тупăр. Вĕсене çырса илĕр. Сăмах тĕпне аффиксĕнчен кĕске йĕрпе уйăрса çырăр.

Тĕслĕх: *пахча-çă.*

Пирĕн колхозра пит ăста пахчаçă пур. Ăна пурте пахчаçă Хветут, теççĕ. Колхозăн пахча питĕ пысăк. Хветут пахчара темĕн те пĕр ӳстерет. Кунĕ-кунĕпе вăл пахчаран тухмасть. Эпир пахчана пырсан, пахчаçă Хветут пире тутлă улмасем, çырласем çитерет.

*186-мĕш хăнăхтару.* Çак аффикссăр сăмахсем çумне *лă, лĕ* аффикссем хушса, аффиксла сăмахсем тăвăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| вăй | телей | сăрт | ăрат |
| хăват | ăс | тĕрĕ | шыв |
| май | йĕрке | чул | вут |
| мел | тĕрек | ан | сĕт |

*187-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсем çумне *лăх* е *лĕх* аффикссем хушса, аффикслă сăмахсем тăвăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ăвăс | ăста | арпа | тирпей |
| яшка | пур | тĕрĕс | тăван |
| кĕпе | ирĕк | тĕме | карта |
| эрне | хăва | шăп | вĕрен |

*188-мĕш хăнăхтару.* Çак сыпăкри япала ячĕсене уйăрса илĕр. Кашни япала ячĕ мĕнле падежрине каласа парăр.

Отечественнăй вăрçă çулăмĕнче Советсен çĕнĕ боецĕсемпе командирĕсем, лётчиксем, артиллеристсем, минометчиксем, танкистсем, пехотинецсем, моряксем пиçĕхсе çитĕнчĕç. Совет Çарĕ — тĕреклĕ те вăйлă çар пулса тăчĕ.

*189-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва çырса илĕр. Сăвăри япала ячĕсем предложенире мĕнле член пулнине кăтартăр.

Çĕкленчĕ асамат кĕперĕ
ярăмланса тӳпе çине.
Ăш çумăр çитрĕ те йĕпетрĕ
паян каллех уй-хирсене.
Тасалчĕ сывлăш çумăр хыççăн,
чечек шăрши тавралăхра.
Хаваслăн та илемлĕн, уççăн
юрă янăрарĕ улăхра.
Юрлать шăпчăк, куккук та уççăн
чарăна пĕлмесĕр аватать.
Хĕвел пăхать. Каллех хавассăн
ĕçе бригада тытăнать.

*190-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă **кĕтӳ** сăмах кашни предложенире мĕнле падежра тăнине каласа парăр.

### Колхоз кĕтĕвĕ.

Аслă хирте пысăк **кĕтӳ** çӳрет. **Кĕтӳре** икçĕр аллă ĕне. Самăр ĕнесем сĕтеклĕ, çӳллĕ курăка çисе çӳреççĕ. Курăк лайăх пирки пĕр ĕни те **кĕтӳрен** тарма шутламасть. Кăнтăр çитрĕ. **Кĕтĕвĕн** канмалла. Кĕтӳçĕ **кĕтĕве** шыв хĕррине тапăра антарать.

*191-мĕш хăнăхтару.* Сăвва çырса илĕр. Паллă тунă **пулă** сăмах кашни предложенире мĕнле падежра тăнине каласа парăр.

### Пулă.

Хĕвел пăхать **тӳпере**,
**пулă** вылять кӳлĕре.
Пулăç ларать вăлтапа,
**пулла** тытать ăманпа.
**Пуллăн** тутлă какай те,
**пуллăн** тутлă вăлчи те.

Пулăç туртать вăлтине,
**пулла** ярать витрене.
**Пулă** тулчĕ витрине,
старик утрĕ хăй килне.
Каçалапа **пулăран**
шӳрпе пиçрĕ пит аван.

*192-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр. Статьяри паллă ячĕсене çырса илĕр. Скобка ăшне вĕсем кашни мĕнле ыйтура тăнине çырăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Çуллахи* (*хăçанхи?*)

### Çуллахи ĕçсем.

Çуллахи вăхăтра колхозра ĕç питĕ нумай. Хирти çумкурăксене çумламалла. Улăхри курăка çулса утă тумалла. Типĕ утта капана хывмалла. Кĕрхи тырăсене вырса пуçтарас пулать. Кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ çĕре çуртыррисем те пулса çитеççĕ. Колхозсен аслă пахчисенче те çулла ĕç нумай. Çавăнпа хресченсем çуллахи вăхăта ĕççи теççĕ.

*193-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă местоименисем мĕнле сăпатрине, мĕнле падежра тăнине каласа парăр.

Тупа тăвап **эпĕ** ленинец пулма,
Ленин пек хĕрӳллĕ кĕрешме, пурăнма.

Хаваслăн тапать манăн телейлĕ чĕрем—
эп Сталина куртăм тăван Кремльте.
**Ун** çирĕп маттур аллине тăванла
тытса чăмăртарăм таса кăмăлтан.
Çав алăпа Сталин аттемĕр **пире**
кăтартрĕ мăн çул—хĕвеллĕ ире.
Асĕпе **вăл** çӳллĕ Памир тăвĕнчен.
**Ун** кăмăлĕ кашни этем чĕринчех.
Хĕвел пек хĕрӳ те ачаш кăмăлпа
савса ăшăтать **вăл** кашни халăха.

*194-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Кашни глаголăн вăхăтне, сăпатне, хисепне каласа парăр.

Рабочисем фабрикăсенче, заводсенче, шахтăсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем машинăсем тăваççĕ, çĕркăмрăкĕ, нефть кăлараççĕ, ĕççыннисене кирлĕ тĕрлĕ таварсем тăваççĕ.

Колхозниксем колхозсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем тĕрлĕ тырă акаççĕ, тĕрлĕ пахча-çимĕç лартса ӳстереççĕ, выльăх ĕрчетеççĕ.

Рабочисем хулара пурăнаççĕ. Колхозниксем ялта пурăнаççĕ. Ялпа хула çирĕп çыхăну тытаççĕ. Хула яла машинăсем, тĕрлĕ таварсем парса тăрать. Ял хулана тĕрлĕ тырă, пахча-çимĕçсем, аш-какай, сĕт-çу парса тăрать.

*195-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвăра тĕл пулакан кашни глаголăн вăхăтне, сăпатне, хисепне кăтартса парăр.

## Х у р ç ă у т.

Кĕр-кĕр-кĕр! кĕрлерĕ
трактор.
Тухрĕ вăл колхоз хирне.
Тĕпренех пуçларĕ паттăр
Çавăрмашкăн тăприне.
Сухапуç чысне çухатрĕ,—
машинлатпăр уйсене.

Хурçă ут тухса аркатрĕ
ĕмĕрхи йăрансене.
Хурçă ут чупать
хир урлă,
хир питне чĕлет, сĕвет.
Машинăпа акнă тырпулă
уйсене илем кӳрет.

*196-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенчен пулманнине пĕлтерекен глаголсене çырса илĕр.

Эпĕ ĕçрен хăрамастăп, вĕренме те, ĕçлеме те ӳркенместĕп. Шкултан таврăнсан, урамра нумай выляса

çӳреместӗп. Кăшт выляса кансан, уроксем хатӗрлетӗп. Кӗнекесене чӗрместӗп, тетрадьсене вараламастăп, таса тытатăп. Эпӗ шкулта пӗрре те начар отметка илмен.

Пушă вăхăтра эпӗ атте-аннене килти ӗçсене тума пулăшатăп. Хам йӗркеллӗ пулнă пирки, мана атте те анне те ятламаççӗ.

*197-мӗш хăнăхтару.* Çак глаголсене хире-хирӗçле пӗлтерӗшлӗ глаголсем тупăр.

Кашлать—кашламасть.
Сӗрлет—...
Чупать—...
Шаккать— . . .
Кӗрлет— . . .
Çӗмӗрӗлет— . . .
Чашкăрать— . . .
Хӗрелет— . .
Вӗрӗ— . . .
Çитӗ— . . .

Авăрмасть—авăрать
Янăрамасть— . . .
Авăтмасть— . . .
Мӗкӗрмест— . . .
Кӗмсӗртетмест— . . .
Авăнмасть— . . .
Пиçмест— . . .
Вӗçмест— . . .
Хускалмӗ— . . .
Çӗкленмӗ— . . .

*198-мӗш хăнăхтару.* Çак предложенисенче пӗрйышши членсене тупăр. Вӗсем мӗнле член пулса тăнине каласа парăр.

1. Вăрманта упа, кашкăр, мулкачă, тилӗ пурăнать. 2. Чăрăш çулла та, кӗркунне те, хӗлле те, çуркунне те симӗс пулать. 3. Çăкăра эпир ӑрашран та, тулăран та тăватпăр. 4. Пирӗн анне яшка çине çӗрулми, ăш, купăста, сухан, тăвар ярать. 5. Рабочисем заводсенче тракторсем, автомобильсем, автобузсем, трамвайсем туса кăлараççӗ.

## ТУПМАЛЛИ


стр.

1 §. Ансăр предложенипе анлă предложени . . . . . . 3
2 §. Сăмах составĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 8
3 §. Хутлă сăмахсемпе мăшăр сăмахсем . . . . . . . . 12
4 §. Япала ячĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
5 §. Япала ячĕсен хисепĕсем . . . . . . . . . . . . . 17
6 §. Япала ячĕсен падежĕсем . . . . . . . . . . . . . 19
7 §. Хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни . . . 20
8 §. *А*, *е* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни 22
9 §. *У*, *ӳ* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни 23
10 §. *Ă*, *ĕ* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни —
11 §. *И* уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни . . 25
12 §. *Й* сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни . . . . 26
13 §. Япала ячĕсем предложенире подлежащи е кĕçĕн член пулни . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
14 §. *Та*, *те*, *тан*, *тен* аффикссене çырасси . . . . . 30
15 §. *Та* тата *те* татăксене çырасси . . . . . . . . . 31
16 §. Хăшпĕр хупă сасăсем пĕрпеклении . . . . . . . . 32
17 §. Паллă ячесем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 33
18 §. Сăпатла местоименисем . . . . . . . . . . . . . 38
19 §. Глаголсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 42
20 §. Глаголсем сăпатланни . . . . . . . . . . . . . . 43
21 §. Глаголăн вăхăчĕсем . . . . . . . . . . . . . . . 44
22 §. Глаголсем хальхи вăхăтра сăпатланни . . . . . . 46
23 §. Глаголсем пулас вăхăтра сăпатланни . . . . . . 49
24 § Иртнĕ вăхăт . . . . . . . . . . . . . . . . . . 50
25 §. Глаголсен тĕпĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 54
26 §. Пулманнине е пулас çуккине пĕлтерекен глаголсем 55
27 §. Сăмахсен предложенири çыхăнăвĕ. Предложенин кĕçĕн членĕсем . . . . . . . . . . . . . . . 57
28 §. Пĕрйышши членлă предложенисем . . . . . . . . 62
29 §. Вĕреннине аса илсе çирĕплетмелли хăнăхтарусем . 66



ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА г. Чебоксары Чувашской АССР



Редактор Н. Т. Васянка  Тех. редактор М. Н. Тимофеева

НТ 00866. Подписано к печати I/VII—1947 г. Заказ № 285
Объем 4,5 п/л. Тираж 30.000 экз.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров Чувашской АССР.

Цена 1 руб. 20 коп.

А. С. ОТАЧКИН

# ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

УЧЕБНИК ДЛЯ 3 КЛАССА
НАЧАЛЬНОЙ ШКОЛЫ

ЧУВАШГОСИЗДАТ □ 1947